1938 НОЙАБĔР 27
ВЫРСАРНИКУН
272(5085) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—7—97, йалхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышленнăç пайĕн—0—85, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Йалти чи лайăх çынсене парти ретне активлăн суйласа илмеле

Сталин йулташ коллективлă хуçалăх çине куçни парти йалхуçалăхĕ пирки тăрăшассине пĕчĕклетмест, а пысăклатать, тесе пĕрре çеç мар кăтартса панă. Колхозсем çине куçни коммунистсем йалхуçалăхĕн кунçулĕсемшĕн ответлă пулса тăрассине пĕчĕклетмерĕ, вăл ăна пысăклатрĕ. Колхоз строй çĕнтерни условисенче йалсенчи парторганизацисен активлă ĕçĕ калама çук кирлĕ те пăха вырăн йышăнать. Сăмах колхоз массисен политикăлă тата производствăлă активлăхĕн пуçне тарасси çинчен, хамăрăн йалта ĕçлекен кадрсене политикăлă воспитани парас ĕçе малала йарасси çинчен пырать.

Партин Тĕп Комитечĕ йалти пур парторганизацисене те колхоз массисен чăн-чăн боевой руководителĕсем туса хурас тесе, колхозсенче большевиксен çирĕп, политика тĕлĕшĕнчен тĕреклĕ чăмăрне (йадро) туса хурас тесе ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет. ПСК(б)П Тĕпкомĕ йалти парторганизацисен ÿсĕмне, аталанăвне пĕрмайах асăрхаса тăрать.

Кăçалхи июль уйăхĕнче Тĕп Комитет йалсенчи парторганизацисем коммунизм ĕçне пĕтĕм чĕререн парăннă чи лайăх колхозниксемпе колхозницăсене, стахановçсемпе стахановкăсене, агрономсене, учителсене тата ытти работниксене партине илес тĕлĕшпе начар ĕçленине палăртрĕ. Ун чухне йалсенчи парторганизацисен виçĕ пайĕнчен пĕр пайĕ ытла чăннипе партине илме тытăнман та пулнă. Партине илме çĕнĕрен тытăннă кунтанпа йалсенчи парторганизацисем вăл вăхăт тĕлне 27.997 кандидат çеç илнĕ пулнă.

Тĕп Комитет кăтартса панисене пурнăçа кĕртсе пырса, йулашки вăхăтра обкомсем, крайкомсем тата нацкомпартисен Тĕпкомĕсем йалсенчи парторганизацисен ÿсĕмĕнче хăшпĕр çитĕнÿсене турĕç. Тăватă уйăх (июнь, июль, август, сентябрь) хушшинче йалта партине çĕнĕрен 49 пин кандидат илнĕ. Çак ĕçре колхозлă йалта большевикла партине çавтери вĕçĕ-хĕррисĕр шанăçа тата унта хăйсемпе парти хушшинчи çыхăнăва организацилĕн çирĕплетсе хума, унăн ретĕсене кĕме хĕрÿлĕн тăрăшакан, партире тăман большевиксен çарĕ çавтери пысăк пулнине кăтартса парать.

Анчах нумай парторганизацисем хăйсен ретĕсене малала ÿстерсе пырас тĕлĕшпе пĕтĕм майсемпе усă курман. Партине илме тытăнман йалти пуçламĕш парторганизацисем пайан кун та сахал мар пур-ха. Воронеж облаçĕнче, сăмахран, çавăн пек организацисем 20 процента йахăн шутланаççĕ. Унтан та ытларах, кунта икĕ çул хушшинче хăйсен ретне темиçешер çын çеç илнĕ район парторганизацийĕсем те пур. Йалла райкомсем—Кирăв облаçĕнчи Кизмезски тата Поломски райкомсем — икĕ çул хушшинче партине пурĕ те темиçе колхозника кăна илнĕ.

Йалсенчи парторганизацисем вăраххăн ÿсни çакна уççăн кăтартса парать: йалти партилĕ-политикăлă ĕçре пит пысăк çитменлĕхсем пур, вăл ĕçĕн виçи халĕ те кирлĕ пек çÿлĕ вырăнта мар-ха. Йалсенчи хăшпĕр парторганизацисен руководителĕсем йалти партилĕ-политикăлă ĕç с о д е р ж а н и й ĕ çинчен шухăшласа пăхма та тăрăшмаççĕ. Йалсенчи нумай парторганизацисемпе райкомсем коммунистсене, партире тăман активă интеллигенцине большевикла воспитани парас ĕçе çаплах çителĕксĕр хаклаççĕ. Сталин йулташ хуçалăх кампанийĕсемпе çеç пĕр йеплĕ ĕçлесе пынин сийĕнĕ çинчен кăтартса панисенчен йалсенчи парторганизацисемпе райкомсем халĕ те-ха пĕтĕм кирлĕ выводсене туман. Машинсем, вăрлăхсем тĕлĕшпе, ытти хуçалăхла ĕçсем тĕлĕшпе ĕçлесе, йалсенчи парторганизацисем час-часах çынсемпе, вĕсен шухăш-кăмăлĕсемпе, вĕсене мĕн кирлипе пачах интересленмеççĕ, вĕсем хушшинче политикăлă ĕçе туса пымаççĕ. Вĕсем çакна манаççĕ: „Хуçалăхри çитĕнÿсем хăйсем, вĕсен тĕреклĕхĕ тата вĕсем нумай вăхăтлăха пуласси пĕтĕмĕшпех те туллийĕнех партилĕ-организацилĕ тата партилĕ-политикăлă ĕçĕн çитĕнĕвĕсенчен килеççĕ“ (Сталин).

Колхозлă йал пурнăçĕнче чи паллăн курăнса тăраканни вăл — çĕнĕ кадрсем калама çук хăвăрт тухса пыни. Социализмлă çĕрĕçĕн пиншер талантлă организаторĕсем—колхоз стройĕн тăшманĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿре политикăлă пысăк шкул витĕр тухнă организаторсем ÿссе çитĕнчĕç. Ÿссе çитĕнче пирĕн, совет интеллигенцийĕ,—вăл хуçалăха йертсе пырать, йалта партипе правительствăн решенийĕсене пурнăçа кĕртсе пыраканĕ пулса тăрать. Йалсенчи парторганизацисем тавра—пиншер тата вуншар пин чаплă çынсем, хăйсем партине чĕререн йуратнине ĕçсемпе, хамăр тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн пурнăçа шеллемесĕр ĕçленипе кăтартса панă çынсем. Вăл çынсем—парти ретĕсен ÿсĕмĕ валли калама çук пысăк резерв пулса тăни çинчен ĕнентерсе тăма та кирлĕ мар.

Нумай примерсем çакăн çинчен калаççĕ: йалсенчи парторганизацисемпе райкомсем партире тăман активпа начар çыхăнса тăраççĕ-ха. Райкомсемпе парторганизацисем час-часах йалти учителсенчен, медицина работникĕсенчен, агрономсенчен, служащисенчен уйăрăлса тăраççĕ, вĕсене хăйсем патне çывхартмаççĕ, вĕсене политикăла вĕренÿре пулăшмаççĕ. Орлов облаçĕнчи Карачев районĕнче, — интеллигенци отрйачĕ пысăк. Медицина работникĕсем кăна 250 çын ытла. Вĕсене идейăлă воспитани парас ĕç çинчен райкомра нимĕн те пĕлмеççĕ тата пĕлме те тăрăшмаççĕ. Хăшпĕр районсенче халĕ те совет интеллигенцийĕ çине большевикла мар, йĕрĕнсе, махайĕвла пăхма пăрахман-ха.

„ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕ“ кăларни йалти интеллигенци калама çук пысăк интересне кĕтсе ÿчĕ. Пирĕн йалти кадрсем марксизм-ленинизм облаçĕнчи тĕп пĕлÿсен çак енциклопедине тарăн вĕренме, большевизма вĕренсе алла илме тăрăшни пысăк. Ленин—Сталин партин историне вĕренсе, йалсенчи интеллигенци парторганизацисем тавра тата ытларах таччăн пĕтĕçет. Унăн чи лайăх представителĕсем парти ретне тураççĕ. Йалсенчи парторганизацисемшĕн ÿсмелли майсем пысăкланса пыраççĕ. Вĕсем райкомсем тата пуçламĕш организацисем интеллигенцине марксизм-ленинизма вĕренме пулăшнă май ÿссе пырĕç.

Йалсенчи парторганизацисен ретĕсене ÿстерсе пымалли хăватлă та шанчăклă резерв вăл—колхозсенчи комсомол пулса тăрать. Вăл çамрăксен малта пыракан пайне пĕрлештерсе тăрать, йалти пĕтĕм общĕствăла-политикăла ĕçе активлăн хутшăнса ĕçлет. Анчах йалсенчи комсомол организацийĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем нумай-ха. Комсомол йалта вăраххăн ÿсет. Комсомолĕцсене политикăла воспитани парас ĕçе уйрăмăнах начар йĕркеленĕ. Йалти комсомол çине тимлĕн пăхассине вăйлатас пулать, ăна тарăн пропагандăла ĕçе организацилеме пулăшас пулать, комсомолри чи лайăх активсене ПСК(б)П ретне кĕме хатĕрлесе пырас пулать.

Хăшпĕр райкомсен секретарĕсем йалсенчи парторганизацисем начар ÿссе пынине çакăнпа ăнлантарса пама тăрăшаççĕ: йалта партине кĕрекеншĕн кирлĕ рекомендацисене тупма йăвăр, теççĕ. Ун пек калаписем çакна çеç кăтартса параççĕ: хăшпĕр райкомсен работникĕсем актива пĕлмеççĕ, унпа çыхăнса тămaççĕ, активиссемпе тÿррĕмĕнех хăйсем ĕçлемеççĕ, вĕсене партине кĕме пулăшмаççĕ. Партине кĕрекенсемшĕн рекомендацисем шыраса тупма „йăвăрри çинчен“ сăмах вĕççĕн те, ничетре те нумай хут кăшкаракан, а хăйсем партине кĕме пĕр йулташа та рекомендаци паман райком секретарĕсемпе работникĕсем çук-и вара пирĕн?

ПСК(б)П ретне кĕме шухăшлакан кашни çын çине у й р ă м а н пăхас мелĕла çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пырса, парторганизацисен партине ушкăн-ушкăнна илме кашт çеç хăтланнине те, çавăн пекех политика тĕлĕшĕнчен шанчăксăр, час-часах йут елементсем большевикла парти ретĕсене шуса кĕме хăтланнине тĕппи-тымарĕпех касса татмала.

Колхозсенчи пуçламĕш парторганизацисем ÿсни партин облаçсенчи тата районсенчи комитечĕсем умне пысăк требованисем кăларса тăратать. Колхозсенчи çамрăк парторгсене, парткомсен секретарĕсене конкретлă руководствă кирлĕ, вĕсем хăйсен идейăлă-политикăлă пĕлÿне пит пысăккăн ÿстерме кирлине туйса тăраççĕ. Обкомсемпе райкомсен пĕрремĕш черетри тумалли задачи — партин йалти работникĕсене куллен-кун пулăшса пырасси, вĕсене политика тĕлĕшĕнчен пиçĕхтерсе çирĕплетесси, воспитани парса вĕсенчен колхоз массисен чăн-чăн большевикла вожакĕсем туса ÿстересси.

(„Правда“ умстатйи, 1938 çул нойаберĕн 25-мĕшĕ).

Францири ĕççыннисем чрезвычайлă декретсене хирĕç протест тăваççĕ

Нойаберĕн 30-мĕшĕнче пĕтĕм çĕршывĕпех стачкăсем пулаççĕ

Даладйе правительстви кăларнă чрезвычайлă декретсем Францири ĕççыннисене пит хыта çиллентерсе тарăхтараççĕ.

Пĕтĕм çĕршыв тăрăх массăлă забастовкăсем пулса иртеççĕ, забастовкă вăхăтĕнче рабочисем савăтсене кĕрсе йышăнаççĕ. Нор, Анатри Сена департаменчĕсенче тата Париж районĕнче аллă предприйати ытла забастовка тăваççĕ, вĕсенче пурĕ рабочисем çĕр пин çын ытла.

Бийанкурта (Париж çумĕнчи вырăн) Рено савăчĕсен администрацийĕсем предприйатисене ултă кунлă ĕрне çине куçарасси çинчен тата ĕçукçине чакарасси çинчен распорйажени кăларнине хирĕç ответлесе 30 пин рабочи забастовка пуçланă. Рабочисем предприйатисене кĕрсе йышăннă. 24 пин çынлă полици отрйачĕ забастовка тăвакансене савăтран кăларса йанă. Полици куççуль йĕпаракан бомбăсемпе усă курнă. Полиципе рабочисем хушшинчи нумай тытăçусем пулса иртнĕ. Çакна пула икĕ йенче те аманнисем пур. Рабочисене 300 çынна йахăн арестленĕ.

Францин çурçĕр йенчи пайĕнче, çăрт-ту промышленнăçлă Анзен районĕнче пĕтĕм горнйаксен, чукунçул çинчи рабочисен, металистсен забастовки пуçланнă. Чăннипе ĕçсен, шахтăсен ĕçĕ чарăнса ларнă.

Нойаберĕн 25-мĕшĕнче Францири компарти Тĕпкомĕн политбюровĕ тата компартин парламентри групи йышăнна постановлени пичетленсе тухнă. Унта çапла каланă: предприйатисен хуçисен провокацилĕ маневрĕсем—Францири метала промышленнăçĕпе çăрт-ту промышленнăçĕнче забастовкă йухăмне çĕклесе йана маневрсем, çавăн пекех тата полицин чарсăр провокацилĕ ĕçĕсем, вĕсем—Францири реакци тăвакан диверси пулса тăрать. Францири ĕççыннисемпе — чрезвычайла декретсене хирĕç тÿрĕсĕрлĕхе, чухăнлăха хирĕç кĕрешĕве çĕклене кĕн ĕççыннисемпе пĕр шухăшлă пулни çинчен каласа, Тĕпком политбюровĕ тата компартин парламентри групи рабочисен ретĕсенчи пĕрлĕхе çыхласа тăма кирлĕ çинчен, профсоюз организацийĕсем кăтартса панисене тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пыма кирли çинчен кăтартса парать.

Ĕçлевĕн пĕтĕмĕшле конфедерацийĕ нойаберĕн 30-мĕшĕнче правительствăн чрезвычайлă декречĕсене хирĕç протестлесе пĕтĕм çĕршыв тăрăх 24 сехетлĕ стачка туса иртерме йышăннă. Сывлăха сыхлав служби предприйатисен хурале ĕçлемелле пулать.

(ТАСС).

Англипе Франци хушшинчи калаçусем

Нойаберĕн 24-мĕшĕнче Англипе Франци хушшинчи калаçусем пуçланнă, калаçусене иртерме Англи правительствин пуçлăхĕ Чемберлен тата йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Галифакс Париже пынă.

Йут çĕршывсенчи хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Парижре центр Йевропăри лару-тăрусем, Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи ĕçсем çинчен, Англипе Францин економикăпа çар тĕлĕшĕнчи туслăхĕ çинчен тăракан ыйтăва, Испани ыйтуне, Германирен тарса тухнă йеврейсем çинчен т. ыт. çинчен те сÿтсе-йавнă.

Францири „Журнал“ хаçат: Франципе Англи министрĕсем „Испани ыйтуне Лондонри „невмешательствă“ комитетне парасси çинчен çăмăлланах килĕшÿ тунă“, тесе кăтартса парать. Çапла вара Испани тĕлĕшпе ĕçсене халĕхи пекех хăварма йышăннă. Унтан министрсем: Германирен тарса тухнă йеврейсем пирки тăракан ыйтăва Германирен тарса тухнă çынсем пирки ĕçлекен комитета (ăна Евианра тунă) памала, тесе вывăд тунă. Чехословаки проблемине. Чехословаки территорийĕ çине Польшăпа Венгри çĕнĕрен алă тăснă май сÿтсе-йавнă. Ку тĕлĕшпе Варшавăра иккĕн пĕрле каласа пĕлтерме шут тунă.

Англири „Манчестр гардийен“ хаçат: Франци правительствин пуçлăхĕ Даладйе, çак калаçусене пуçласа, хăйне халăх шанассине кĕрешсе илме тăрăшнă, тесе шутлать. Мÿнхĕнра кавар тунипе, чрезвычайлă декретсем кăларнипе вăл шанчăк çĕмĕрĕлнĕ. Икĕ премйерĕ те, — тесе çырать хаçат,—тĕнчери лару-тăрăва йĕркелесе йарас шутпа темĕн пысăк ĕç тунă пек картинă туса хурас шутпа кăна Парижре тĕл пулнă, чăннипе илсе пăхсан, унта нимĕн усăлă ĕçсем те туман.

Нойаберĕн 25-мĕшĕнче Чемберленпа Галифакс Парижрен Лондăна тухса кайнă. (ТАСС).

Совет Сойузĕн Геройĕсен Гризодубăвă, Осипенко тата Раскова йулташсен вĕçевне пĕтĕм тĕнчери рекорд тесе йышăннă

Хайулă совет летчицисем—Совет Сойуз Геройĕсем Гризодубăвă, Осипенко тата Раскова йулташсем сентаберĕн 24—25-мĕшĕсенче „Родина“ самолет çинче Мускавран Инçет-Хĕвелтухăçне çити пĕр анса лармасăр вĕççе тухнăччĕ, вĕсем 5.908 километр та 610 метр вĕçнĕ.

Пĕтĕм тĕнчери авиаци федерацийĕн (ФАИ) президиумĕ халь вăл вĕçеве инçене тÿррĕмĕн вĕçес йенĕпе хĕрарăмсем тунă пĕтĕм тĕнчери рекорд тесе çирĕплетнĕ.

(ТАСС).

Чимкентри хура тăхлан савăчĕ çулталăк планне тултарнă

ЧИМКЕНТ, нойаберĕн 25-мĕш. Чимкентри Калинин йачĕпе тăракан хура тăхлан савăчĕ çулталăк планне тултарнă. Тăхăр уйăхта 24 кун хушшинче савăт 1937 çулта пĕтĕмпе туса кăларнă хура тăхланран 20 процент ытларах кăларнă.

Пайан савăтра митинг пулса иртнĕ. Савăтри рабочисен, инженерсен, техниксен тата служащисен коллективĕ йышăннă резолюцире, савăта хура тăхланпа цинк промышленнăçĕнче малта пыракан тăватпăр, тесе каланă.

(ТАСС).

Совет Сойузĕн Геройĕ РСФСР Верховнăй Совет депутачĕ полковник И. А. Лакейĕв социализмлă уй-хирсен йатлă çыннисем—Тимирйазĕв йачĕпе тăракан йалхуçалăх академин студенчĕсем хушшинче.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмала, малти ретре): А. В. Ушаковă — Макушинскри (Челябинск облаçĕ) тĕштырă совхозĕнчи трактористкă; Й. П. Шелест—Платнирăвкăри (Краснодар крайĕ) МТС комбайнерĕ; Совет Сойузĕн Геройĕ, полковник И. А. Лакейĕв; Н. А. Комăв—Ромашкинăри (Оренбург облаçĕ) МТС комбайнерĕ. ИККĔМĔШ РЕТРЕ (сулахайран сылтăмала): Д. Г. Соловйов—Прималкинскри (Кабардино-Балкар АССР) тĕштырă совхозĕнчи комбайнер; В. П. Лешков ОКДВА бойецĕ; П. И. Норминский—Новорождественскри (Краснодар крайĕ) МТС комбайнерĕ; И. И. Мусинскайа—„Парижская Коммуна“ колхозри (Николайĕвск облаçĕ) сахăр кăшманĕ хирĕсенчи стахановкă; Ф. Д. Афанасйĕв—Штейнгардски (Краснодар крайĕ) МТС комбайнерĕ; Е. Г. Адаменко—Сталин йачĕпе тăракан колхозăн (Бородйанск районĕ, Кийĕв облаçĕ) сĕт-çу ферминче пăрусене пăхаканĕ; Е. И. Дробйазчинă—„Красная Поляна“ (Курск облаçĕ) совхозри звенйевойĕ.

Йевзерихин фото-ÿкерчĕкĕ („Пресклише“).

Польшăпа Венгри Закарпат Украини çине тапăнма хатĕрленеççĕ

Лондонран пĕлтернĕ тăрăх, Польшă Закарпат Украинин чиккисем хĕрринче хăйĕн 7 дивизине пухса тăратнă. Кунсăр пуçне, Польшă Румыни чиккисем патне 40 пин çынлă çар илсе пынă. Çак çар, Румыни Чехословакине пулăшма хăтлансан, Румынийе хирĕç тухмала пулать. Польшăпа Венгри Закарпат Украини çине нойаберĕн 27-мĕшĕнче тапăнма палăртса хунă.

Англири Рейтер агентстви çырнă хыпар тăрăх, Германи, халиччен Закарпат Украинине туртса илессине хирĕç тăнăскер, халь ĕнтĕ хăйĕн политикине улăштарнă пулать, Польшăпа Германи планĕсене хирĕç тăмасть пулать. Унтан тата Гитлĕр Данцига хăйне кайала памалла, çавăн пекех тата Германийе Закарпат Украинин территори урлă чукунçул тата автомобиль çулĕ тума права памалла ыйтать, вăл çулсем Румыни чикки патне çитиех тăсăлса выртмалла.

(ТАСС).

Китайри вăрçă

Центр Китайра Китай çарĕсем, Иочжоуран Чанша çинеле наступлени туса пыракан йапонецсене малала кайма чарса лартса, хăйсен позицийĕсене малалах çирĕплетеççĕ.

Ханькоуран çурçĕр йенче хайарран çапăçнă хыççăн, Китай çарĕсем Ушельгуань йатлă ту хушăкне йышăннă, вăл хушăк витĕр Бейпин—Ханькоу чукунçулĕ тухса кайать.

Ханькоуран çурçĕр - хĕвеланăç йенче, Синьйан хĕррисенче вăйлă çапăçусем пыраççĕ.

Нанкинран кăнтăр йенче Ухху районĕнче çапăçусем пыраççĕ. Китай çарĕсем икĕ çулĕ вырăна йышăннă. Йапонецсем кайала чакса Ухупа Ваньчжине кĕнĕ.

Аньхуей провинцин хĕвеланăç пайĕнче Китай çарĕсем. Люане йышăнса, малала, кăнтăр-хĕвеланăç йеннеле куçса пыраççĕ.

Кăнтăр Китайри фронтри Кантон хĕррисенче çапăçусем пыраççĕ. Кантон тавра партизанла йухăм кунсеренех сарăлса пырать. Пĕтĕм Гуандун провинцине йатарласах тунă вунă район çине пайланă. Вĕсенчен кашниничех партизан отрйачĕ кĕрешет. (ТАСС).

Тырă сутаççĕ

* * Шупашкар районĕнчи нумай колхозсем хăйсенчен ытлашши тырăна государствăна сутма тытăнчĕç. Шĕнерпуç йалсоветне кĕрекен „XI лет Октября“ колхоз 568 пăт, Анаткасси йалсоветне кĕрекен „Ударник“ колхоз 300 пăт, Сарапакасси йалсоветне кĕрекен „Хочахмат“ колхоз 390 пăт, „Урожай“ колхоз 300 пăт тырă сутрĕç.

Государствăна тырă сутакан колхозсем йалхуçалăх машинисем туйанма зайавкăсем параççĕ.

Й. Васильйĕв.

С. М. Кирăв

Тискеррĕн вĕлерни тăватă çул тултарнă тĕле

Тăватă çул кайарах—1934 çулти декаберĕн 1-мĕшĕнче — фашизма тара кĕрешнĕ троцкисла-бухаринла ирсĕрсем большевикла парти руководителĕсенчен пĕрне, халăх йуратнă Сергей Миронăвич Кирăва тĕттĕм кĕтесрен тискеррĕн вĕлерне.

Асла Сталинăн шанчăклă соратникĕ тата тусĕ С. М. Кирăв большевик-революционерăн мухтавлă çулĕпе утса тухнă, хăйĕн пĕтĕм пурнăçне Ленин—Сталин ĕçне панă.

Сергей Миронăвич 1886 çулта ĕлĕкхи Вйатка кĕпĕрнинчи пысăк мар уйес хулинче — Уржумра çуралнă. Çамрăклах ашшĕ-амăшĕсĕр тăрса йулса, Сергей Миронăвич ачаранах чухăн пурнăçпа выçă асапне курнă.

18 çулта чухнех С. М. Кирăв — хăйĕн çине палăртнă большевик пулнă. 1904 çултан пуçласа 1910 çулччenхи тапхăрта Сергей Миронăвича виçĕ хут арестленĕ, нумай вăхăт хушши тĕрмесенче асапланнă. Анчах патша тĕрми большевикăн чун-хавалне хуçайман. Вăл хăйĕн пĕлÿлĕхне çĕклес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлет. Марксăн тата Ленинăн ĕçĕсене вĕренет. Унтан—Томскра, Владикавказра партилĕ вăрттăн ĕç. 1915 çулта ăна тăваттăмĕш хут арестлеççĕ, каллех тĕрме, ĕмĕрлĕхех Нарыма ссылка ăсатас хăрушлăх. Ссылка йарассине пурнăçа кĕртме февраль революци чăрмантарнă.

1918 çулта парти Сергей Миронăвича пысăк та кирлĕ ĕç тума—Астрăхане тăшманран сыхлас ĕçе организацилеме хушать. Вуннĕрĕмĕш çарăн пуçне тăрса, Кирăв пĕтĕм Кăнтăр фрончĕшĕн опорлă пункт пулса тăнă Астрăхане тăшмана памасăр сыхласа хăварать, çапла вара контрреволюцин планĕсене çĕмĕрет, унтан вăл Деникина çĕмĕрсе тăкас ĕçе тата Çурçĕр Кавказра, Бакура çĕнĕрен Совет влаçĕ туса хурас ĕçе хутшăнса ĕçлет.

Граждан вăрçи пĕтнĕ хыççăн С. М. Кирăв пирĕн партин чи малта пыракан организацийĕсенчен пĕрне—Баку организацине йертсе пырать. Вăл йертсе пынипе Азербайджанри нефть промышленнăçне çĕнĕрен ура çине тăратнă. Совет Кавказлĕшйĕнне тăшманла меньшевикла ирсĕрсенчен, националистсенчен, сылтăммисенчен, троцкистсенчен тата ĕççыннисен ытти тĕрлĕ тăшманĕсенчен тасатас тĕлĕшпе С. М. Кирăв калама çук пысăк ĕç туса ирттернĕ.

Партин 14-мĕш сйеçĕ хыççăн, 1926 çулта, С. М. Кирăв Ленинградри парторганизаци пуçне тăрать. Партин шанчăклă ывăлĕ, вăл Ленинградра троцкисла-зиновйĕвла-бухаринла бандитсене çĕмĕрсе тăкас ĕçĕн организаторĕ пулнă, вăл Ленинградри организацийе хамăр партин Тĕп Комитечĕ тавра çирĕппĕн пĕтĕçтернĕ.

Кирăв йулташа пĕтĕм парти пĕлнĕ те йуратнă. 1921 çултан пуçласа Сергей Миронăвич татти-сыпписĕрех ПСК(б)П Тĕп Комитечĕн составĕнче пулнă, 1930 çулта вара вăл—ПСК(б)П Тĕпкомĕн Политбюро членĕ.

Çулăмлă большевика, халăх тăшманĕсене хирĕç пĕр килĕшсе тăмасăр кĕрешсе пынă Кирăва троцкисла-бухаринла шпионсемпе çынвĕлеренсем уйрăмах курайман. Çав бандăна организацилекене, хавалантарса тăраканĕ Иуда-Троцкий пулнă. Унăн помощникĕсем тата усал та ирсĕр ĕçсене пурнăçа кĕртсе пыраканĕсем Зиновйĕв, Каменĕв, Бухарин тата вĕсен хÿрисем пулнă. Хăйсем партине йуратмин синчен икĕ питлĕ сăмахсем каланипе витĕнсе пытанса, йут çĕршывсенчи разведкăсен çак агенчĕсем совет халăхĕн çулпуçĕсене вĕлерме хатĕрленнĕ, ССР Сойузĕ çине империалистсем тапăнас-мĕн пулсан вăрçăра ССР Сойузне çĕмĕрсе такмала тума хатĕрленнĕ.

Совет халăхĕ фашизла ирсĕр çĕленкалтасене таптаса лапчăтрĕ, нимĕç-йапон фашисĕсен çак ылханлă ирсĕр тарçисемпе агенчĕсене пĕтерсе хучĕ, троцкисла-зиновйĕвла бандитсен пĕтĕм çĕлен йăвисене çĕмĕрсе тăкрĕ.

С. М. Кирăва тискеррĕн вĕлернĕ хыççăн пĕтĕм парторганизацисем патне йанă хăйĕн çырăвĕнче Пĕтĕм Сойузри Коммунистсен (большевиксен) Партин Тĕп Комитечĕ çапла кăтартса панă:

„Асра тытас пулать, тăшмансен положенийĕ мĕн чул шанчăксăртарах, çав тăранах вĕсем „чи йулашки средствăсене“— пĕтме пÿрнисен Совет влаçне хирĕçле кĕрешĕвĕнчи йулашки средствине хапăл туса йарса илессĕ. Çакна асра тытас пулать тата сыхалăхлă пулас пулать“.

Тĕп Комитет парти членĕсем хушшинче парти историне вĕрентес ĕçе тивĕçлĕ çÿлĕ вырăна лартма чĕнчĕ, мĕншĕн тесен, „пирĕн парти историне пĕлни тата ăнланни парти членĕсене туллийĕнех революцилĕ сисĕмлĕхлĕ туса çитерме кирлĕ паха та пысăк средства пулса тăрать“.

Сталин йулташ йертсе пынипе ССР Сойузĕнчи ĕççыннисем малала—коммунизм патнелле ăнăçлăн пыраççĕ, чаплă большевикăн—Кирăвăн чĕри çав коммунизм йачĕпе тапса тăнă.

(ТАСС).

С. М. Кирăва асăнса

Фашизмăн троцкисла-зиновйĕвла ирсĕр агенчĕсем тискеррĕн вĕлерне Сергей Миронăвича, коммунизмшăн пыракан кĕрешĕвĕн çулăмлă борецне, Совет çĕршывĕнчи халăх ĕмĕр асра тытать.

Декаберĕн 1-мĕшĕнче Орджоникидзе хулинче, 1912 çултан пуçласа 1918 çула çитиччен Сергей Миронăвич Кирăв пурăннă çуртра, музей уçаççĕ. Вăл музейра Сережă Кострикăвăн (Кирăвăн) ача чухнехи пурнăçĕпе çамрăклăхĕ тата унăн революцилĕ ĕçĕсем çинчен каласа паракан фото-ÿкерчĕксемпе документсем çĕре йахăн пулаççĕ. Кирăв ĕçлесе ларнă пысăк мар пÿлĕме çав вăхăтри пекех йĕркелеççĕ. Азербайджанри промыслăсенче, савăтсенче, колхозсенче, совхозсенче, учрежденисенче С. М. Кирăвăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен докладсемпе калаçусем туса ирттереççĕ. Районсенчи парткабинетсем выставкăсем организацилеççĕ.

Парти историйĕн Шаумйан йачĕпе тăракан институчĕ Бакура Сергей Миронăвич пурăннă хватерте музей тăвать.

Композитор - комсомолец Вано Мурадели нумай пулмасть „Кирăва асăнса“ йатлă хăйĕн пĕрремĕш монументаллă произведенине—симфонине çырса пĕтерне. Вăл симфонине декаберĕн 1-мĕшĕнче Мускаври консерваторин пысăк залĕнче Сергей Миронăвича асăнса пухăннă вечĕрта вылйаççĕ.

(ТАСС).

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (бољшевиксен) Партин ИСТОРИЙĔ

ПСК(б)П Тĕпкомĕн Комиçсийĕ редакциленĕ. **КĔСКЕ КУРС.** ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланă. 1938 ç.

XI СЫПĂК

БОЉШЕВИКСЕН ПАРТИЙĔ ЙАЛХУÇАЛĂХНЕ КОЛЛЕКТИВЛАССИШĔН ПЫНĂ КĔРЕШЎРЕ.

(1930—1934 çулсем)

1. 1930—1934 çулсенче пулнă пĕтĕм тĕнчери лару-тăру. Капиталисăмлă çĕршывсенчи економикăлă кризис. Йапони Манчжурине тытса илни. Германире фашиссем влаç патне пыни. Вăрçăн икĕ вучахĕ.

ССР Союзĕ çĕршыва социалисăмла индустрилес ĕçре пысăк çитĕнўсем тунă тата промышлĕнăçа пысăк хăвăртлăхсемпе аталантарса пынă вăхăтра, капиталисăм çĕршывĕсенче 1929 çулăн вĕçĕнче пĕтĕм тĕнчери економикăлă кризис халичченхи пулман пек аркатулă вăйпа сарăлса вăйланса кайнă, вăл 1929 çул хыççăнхи виçĕ çулта тăрăнланса пыма тытăннă. Промышлĕнăç кризисĕ йалхуçалăхĕн, аграрнăй кризиспа пĕрлешсе кайнă, çакă вара капиталисăмлă çĕршывсен лару-тăруне татах та ытларах начарлатса йанă.

Кризис пулнă виçĕ çул хушшинче (1930—1933) ССР Сойузĕнче промышлĕнăç икĕ хут ытла ўссе, 1933 çулта, 1929 çулти виçепе танлаштарсан, 201 процента çитнĕ, çав вăхăтрах Америкăри Пĕрлешўлĕ Штатсен промышлĕнăçĕ 1933 çулăн вĕçĕ тĕлне 1929 çулăн виçинчен 65 процент Ÿаран чакнă, Англи промышлĕнăçĕ—86 процента çити, Германи промышлĕнăçĕ—66 процента çити, Франци промышлĕнăçĕ—77 процента çити чакнă.

Çакă вăл хуçалăхăн социалисăмлă системи капиталисла системăран маларах тăнине тепĕр хут кăтартса панă. Вăл çакна кăтартса панă: тĕнчери економикăлă кризиссенчен ирĕклĕ пĕртен-пĕр çĕршыв вăл социалисăмла çĕршыв пулса тăрать.

Пĕтĕм тĕнчери економикăлă кризиса пула 24 миллион ĕççĕррисен ывçăх, çукăх, хурлăх тўссе пурăнмала пулнă. Аграрлă кризисрăн вунщар миллион хресченсем хĕн курнă.

Пĕтĕм тĕнчери економикăлă кризис империалисăмла государствăсем хушшинчи хирĕçўсене, çĕнтерекен çĕршывсемпе парăнна çĕршывсем хушшинчи, империалисăмла государствăсемпе колонилĕ тата пăхăнса тăракан çĕршывсем хушшинчи, рабочисемпе капиталиссем хушшинчи, хресченсемпе помещиксем хушшинчи хирĕçўсене татах та ытларах çивĕчлентерсе йанă.

Сталин йулташ партин XVI сьесĕнче хăйĕн отчотлă докладĕнче буржуази економикăлă кризисрăн пĕр йенчен,—фашисла диктатурă, урăхла каласан, капиталисăмăн чи реакцилĕ, чи шовинисла, чи империалисла елеменчĕсен диктатурине туни урлă рабочи класа путарса лартнипе, тепĕр йенчен—колониссене вайлăнисен сферине вайсăррăн хўтĕлесе тăракан çĕршывсен интересĕ шучĕпе тепĕр хут валеçессишĕн вăрçă тапратса йанипе тухма тăрăшĕ, тесе кăтартса панă. Ку вăл çапла пулнă та.

1932 çулта Йапони йенчен вăрçă хăрушлăхĕ вăйланнă. Йапони империалисĕсем, Иевропăри державăсемпе Америкăри Пĕрлешўлĕ Штатсем економикăлă кризиса пула пĕтĕмпех хăйсен шалти ĕçĕсем ăшне путнине курса, çакăнпа усă курма тата вăйсăррăн хўтĕленсе тăракан Китайă çине хĕссе пăхма, Китайă хăйне пăхăнтарма тата унта пуçпулса тăма шут тытнă. Китайă хирĕç вăрçа тухасси çинчен пĕлтĕрмесĕр тата хăйсемех тунă „выранти инцидентсемпе" мошенникла усă курса, Йапони империалиссем хăйсен çарĕсене Манчжурине вăрă-хурахла кĕртсе йанă. Çурçĕр Китайа çавăрса илме тата ССР Сойузĕ çине тапăнма хăйсене ваљли майлăрах позицисем хатĕрлесе. Йапони çарĕсем Манчжурине пĕтĕмпех тытса илнĕ. Хăйĕн аллине ирĕк парас тесе, Йапони Лигă нацийĕн тухнă тата вăйлăн хĕçпăшалланма тытăннă.

Çакă вăл Америкăри Пĕрлешўлĕ Штатсене, Англие, Францийĕ Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи тинĕсри хăйсен вăрçă хатĕрĕсене ўстерме тĕртнĕ. Йапони уççăнах çак тĕллеве—Китай хăйне пăхăнса тăмала тăвас тата Иевропăпа Америкăн империалисла держависене унтан кăларса йатас тĕллеве тытнă. Лешсем çакна хирĕç хĕçпăшалланассине вăйлатнипе ответленĕ.

Анчах Йапони тата тепĕр тĕллев—Советăн Инçет-Хĕвелтухăçне çавăрса илес тĕллеве те тытнă. Паллах, ССР Сойузĕ çавăн пек хăрушлăх айаккипе иртсе кайма пултарайман, вăл Инçет-Хĕвелтухăç крайĕн оборона пултарулăхне вăйлăн çирĕплетме тытăнна.

Çапла вара, Йапони фашисланнă империалисĕсене пула, Инçет-Хĕвелтухăçĕнче вăрçăн пĕрремĕш вучахĕ пулса тăнă.

Економикăлă кризис капиталисăмăн хирĕçўвĕсене Инçет-Хĕвелтухăçĕнче кăна мар çивĕчлентерсе йанă. Вăл вĕсене çавăн пекех Иевропăра та çивĕчлентерсе йанă. Промышлĕнăçпа йалхуçалăхĕн вăраха кайнă кризисĕ, ĕççĕррисем пит те нумай пулни тата пурлăхсăр классен пурнăçĕ татах та начарланса, рабочисемпе хресченсен кăмăлсăрлăхне ўстернĕ. Кăмăлсăрлăх рабочи класăн револђуцилĕ тарăхăвне ўсее куçса пынă. Кăмăлсăрлăх Германире, вăрçă пирки, çĕнтерекенсем пулнă Англипе Франци ваљли пухнă контрибуцисем пирки тата економикăлă кризис пирки пуханса çитнĕ çĕршывра уйрăмăнах вăйланса кайнă, унта рабочи класа хăйĕн тата йут çĕршывсен, Англипе Франци буржуазийĕн, пусмăрлăхне чăтса хăвахур курма тивнĕ. Рейхстагăн йулашки, влаçа фашиссем илес умĕнхи, суйлавĕсенче коммуниссен партийĕ илнĕ улта миллион сасăсем çавăн çинчен пит те уççăн каланă. Германи буржуазийĕ Германире сыхланса йулнă буржуалă-демократилĕ ирĕклĕхсем буржуазине хирĕç усал ĕçсем тума пултарассине, рабочи клас вăл ирĕклĕхсемпе револђуцилĕ йухăма сарса йарас ĕçре усă курма пултарассине курнă. Çавăнпа та вăл: Германире буржуази влаçне сыхласа хăварма пĕр меслет кăна — буржуалă ирĕклĕхсене пĕтерес, парламента (рейхстага) ниме тăми туса хурас, рабочи класа путарса лартма пултаракан тата реваншла шухăш-кăмăллă вак буржуалă массăсем хушшинче никĕс тупма пултаракан террорисла, буржуалă-националисла диктатурă тăвас меслет кăна пур, тесе шутланă. Вăл вара, фашиссене, халăха улталама хăйсене национал-социалиссен партийĕ тесе калаканскерсене, влаç патне чĕнсе илнĕ. фашиссен партийĕ, пĕрремĕшĕнчен, империалисла буржуазин чи реакцилĕ тата рабочи класшăн чи тăшманла пайĕ пулса тăнине, тата, иккĕмĕшĕнчен,—хăйĕн хыççăн националисла шухăш-кăмăллă вак буржуазин миллионлă массисене илсе кайма пултаракан чи реваншлăрах парти пулса тăнине буржуази лайăх пĕлнĕ. Буржуазине çак ĕçре рабочи клас предателĕсем—Германири социал-демократин лидерĕсем пулăшнă, вĕсем хăйсен соглашателле политикипе фашисăма ваљли çул тасатса хунă.

1933 çулта Германири фашиссене влаçа ниме май панă условисем çавăн пек пулнă.

Германири событисене анализ туса, Сталин йулташ партин XVII сьесĕнче хăйĕн докладĕнче çапла каланă:

„Германире фашисăм çĕнтерни рабочи клас вăйсăррине кăтартакан паллă вырăнне çеç тата социал-демократи, рабочи класа нумай хут сутса, фашисăма çул тасатса панă пирки тунă çĕнтерў вырăнне çеç хумала мар. Ăна çавнашкалах буржуази вăйсăррине кăтартакан паллă вырăнне те, буржуази влаçа ĕлĕкхи парламентарисăм меслечĕсемпе, буржуалă демократи меслечĕсемпе тытса тăма пултарайман пирки унăн хăйĕн шалти политикинче терророла тытăм политики çине куçма тивнине кăтартакан паллă вырăнне те хумала..." (Сталин, Вопросы ленинизма, стр. 545).

Хăйсен шалти политикине Германири фашиссем рейхстага вут тĕртсе йанипе, рабочи класа тискерĕн путарнипе, рабочи класăн организацийĕсене пĕтернипе, буржуала-демократилĕ ирĕклĕхсене пĕтересе хунипе палăртса уçăланă. Хăйсен çĕршыв тулашĕнчи политикине—Лигă нацийĕн тухнипе тата Иевропăри государствăсен чиккисене Германине усăллăн ирĕксĕрлениле тепĕр хут пăхса тухассишĕн вăрçа уççăнах хатĕрленипе паллă тунă.

Çапла вара, Германири фашиссене пула, Иевропăн центрĕнче вăрçăн иккĕмĕш вучахĕ пулса тăнă.

Паллах, ССР Сойузĕ çавăн пек пысăк факт айаккипе иртсе кайма пултарайман. Вăл вара, çĕршывăн Хĕвеланăç чиккисенче оборона пултарулăхне çирĕплетсе пырса, Хĕвеланăçĕнче событисем мĕнле пулса пынине çивĕччĕн сăнаса тăма пуçланă.

2. Кулакла елементсене пўлсе пырас политикăран кулаксем клас пулса тăнине пĕтерес политикă патне. Партин колхоз йухăмĕнчи политикине пăснисемпе кĕрешни. Пĕтĕм фронтпа капиталисла елементсене хирĕç наступлени туни. Партин XVI сьесĕ.

Хресченсем колхозсене массăлăн кĕни, — вĕсем колхоза кĕресси 1929—1930 çулсенче анлăн сарăлса кайнă, — вăл партипе правительствă малтан туса пынă пĕтĕм ĕççен резуљтачĕ пулнă. Йалхуçалăхне ваљли трактăрсемпе машинсем массăлăн туса кăларма пуçланă социалисăмлă индустри ўсни; 1928 тата 1929 çулсенчи тырă хатĕрлев кампанийĕсем вăхăтĕнче кулаксене хирĕç татăклăн кĕрешни; хресченсене коллективлă хуçалăха тытса пыма майĕпен вĕрентсе пыракан йалхуçалăх кооперацийĕ ўсни; пирвайхи колхозсемпе совхозсен лайăх опычĕсем, — çаксем пурте талккишпех коллективлас ĕçе куçассине, хресченсем колхоза йалĕ-йалĕпе, районĕ-районĕпе, округĕпе кĕрессине хатĕрленĕ.

Талккишпех колхоза куçасси хресченсен тĕп массисем колхоза лăпкăн та мирлĕн кĕрес йĕркепе мар, хресченсем кулаксене хирĕç массăлăн кĕрешес йĕркепе пулса пынă. Талккишпех колхоза кĕни йал таврашĕнчи пĕтĕм çĕр колхозсен аллине куçнине пĕлтерне, анчах çав çĕрĕн чылай пайĕ кулаксен аллинче пулнă, — çавăнпа та хресченсем кулаксене çĕр çинчен хăвала-хăвала йанă, вĕсене раскулачивани тунă, выљăх-чĕрлĕхсене, машинĕсене туртса илнĕ тата Совет влаçĕнчен кулаксене арĕслеме тата йалтан кăларса йама ыйтнă.

Талккишпех коллективизаци туни, çапла вара, кулаксене пĕтерессине пĕлтерне.

Çакă вăл—талккишпех коллективизаци тунă никĕс çинче кулаксем клас пулса тăнине пĕтерес политикă пулнă.

Çак вăхăт тĕлне ССР Сойузĕнче ĕнтĕ кулаксене пĕтерме, вĕсем хирĕç тăнине çапса хуçма, вĕсем клас пулса тăнине пĕтерме тата вĕсен производствине колхозсемпе совхозсен производствипе улăштарма материаллă базă çителĕклĕ пулнă.

1927 çулта кулаксем 600 миллион пăт ытла тырă тунă, вăл шутран таварлă тырă 130 миллион пăта йахăн панă. Колхозсемпе совхозсем вара 1927 çулта таварлă тырă 35 миллион пăт кăна пама пултарнă. 1929 çулта, бољшевикла парти совхозсемпе колхозсене аталантарас тĕлĕшпе çирĕп çул тытса пынине пула тата йала трактăрсемпе йалхуçалăх машинĕсем парса тăракан социалисăмлă индустри ўснине пула, колхозсемпе совхозсем ўссе пысăк вăй пулса тăнă. Çак çултах та ĕнтĕ колхозсемпе совхозсем тырă 400 миллион пăтран кайа мар туса илнĕ, вăл шутран таварлă тырă 130 миллион пăт ытла панă, урăхла каласан, кулаксем 1927 çулта панинчен нумайрах панă. 1930 çулта вара колхозсемпе совхозсем таварлă тырă 400 миллион пăт ытла памала пулнă тата чăнах панă та, урăхла каласан, кулаксем 1927 çулта панинчен нумай ытларах.

Çапла вара, çĕршывăн економикинче классен вăйĕсем улшăнса куçса тăни тата кулаксен тырă производствине колхозсемпе совхозсен производствипе улăштарма кирлĕ материаллă база пурри бољшевикла партине кулаксене пўлсе пырас политикăран çĕнĕ политикă çине, талккишпех коллективизаци тунă никĕс çинче кулаксем клас пулса тăнине пĕтерес политикă çине куçма май панă.

1929 çулччен Совет влаçĕ кулаксене пўлсе пырас политикăна пурнăçа кĕртсе пынă. Совет влаçĕ кулак çине пысăкрах налог хунă, ăна çирĕп хакпа государствăна тырă сутма хушнă, çĕр тара илесси çинчен калакан саккун тăрăх кулаксем усă куракан çĕр хисепне хăшпĕр виçе таран пўлсе пынă, уйрăм хресченсен хуçалăхĕнче тара тытса ĕçлеттересси çинчен калакан саккун тăрăх кулак хуçалăхĕн виçисене пўлсе пынă. Анчах вăл кулаксене пĕтерес политикăна тытса пыман-ха, мĕншĕн тесен çĕре тара илесси тата тара тытса ĕçлеттересси çинчен калакан саккунсем кулаксем пулма пултармала тунă, раскулачивани тума чарни вара ку тĕлĕшпе паллă гаранти панă. Çавăн пек политикăна пула, кулаксене ўсме чарса пынă, çавăн пек пўлсе пынисене чăтайман кулаксен хăшпĕр сийĕсем йухăнса, пĕтсе пынă. Анчах вăл кулаксем клас пулса тăрассин хуçалăхла никĕсĕсене пĕтермен, вăл кулаксене пĕтерессипатне илсе пыман. Ку вăл кулаксене пĕтерес политикă мар, вĕсене пўлсе пырас политика пулнă. Вăл пĕр палла вăхăтчен, колхозсемпе совхозсем вăйсăр пулнă пирки кулаксен тырă производствине хăйсен производствипе улăштарма пултарайман вăхăтра, кирлĕ пулнă.

1929 çул вĕçĕнче, колхозсемпе совхозсем ўссе пынă май, Совет влаçĕ çавăн пек политикăран татăклă çаврăну тунă. Вăл кулаксем клас пулса тăнине пĕтерес, тĕп тăвас политикă çине куçнă. Вăл çĕре тара илесси тата тара тытса ĕçлеттересси çинчен калакан саккунсене прахăçланă, çапла вара, кулаксене çĕрсĕр тата тара тытнă работниксемсĕр тăратса хăварнă. Вăл раскулачивани тума чарассине прахăç тунă. Вăл колхозсем ваљли кулаксен выљăх-чĕрлĕхĕсене, машинĕсене тата ытти инвентарне конфискацилеме хресченсене ирĕк панă. Кулаксене експроприациленĕ. Вĕсене 1918 çулта промышлĕнăçри капиталиссене експроприациленĕ пекех експроприациленĕ, анчах уйрăмлăхĕ çакăнта пулнă: ку хутра кулаксен производствă средствисем государствă аллине мар, пĕрлешнĕ хресченсен аллине, колхозсен аллине куçнă.

Çакă вăл пит те пысăк револђуцилĕ переворот пулнă, обшчĕствăн кивĕ качĕствăлă состойанинчен çĕнĕ качествăлă состойанине сикни пулнă, çак сикĕм хăйĕн резуљтачĕсемпе 1917 çулти Октăбĕрти револђуцилĕ переворотпа пĕр пекех пысăк вырăнта тăнă.

Çак револђуцин уйрăмлăхĕ вăл çакăнта пулнă: ăна çўлтен, государствă влаçĕ пуçарса йанипе тунă, ăна тума кулак пусмăрне хирĕç кĕрешекен, колхозри ирĕклĕ пурнăçшăн кĕрешекен хресченсен миллионлă масси айалтан пулăшса пынă.

Вăл, çак револђуци, пĕрре çапнипе социалисăм строитĕлствин виçĕ тĕп ыйтуне татса панă:

а) Вăл пирĕн çĕршыври чи нумай йышлă експлоататăрлă класа, кулаксен класне, капиталисăма кайала таврассин тĕрекне пĕтернĕ;

б) Вăл пирĕн çĕршыври чи нумай йышлă ĕççыннисен класне, хресченсен класне, капиталисăма çуратса тăракан уйрăм хуçалăхлă çулйĕр çинчен обшчĕствăлă, колхозлă, социалисăмлă хуçалăх çулйĕрĕ çине куçарнă;

в) Вăл Совет влаçне чи сарлака тата калама çук кирлĕ, çавăн пекех тата халăх хуçалăхĕн чи кайа йулнă облăçĕнче—йалхуçалăхĕнче социалисăмлă базă туса панă.

Çапла тунипе çĕршывăн ăшĕнче капиталисăма кайала таврмали йулашки çăлкуçĕсене пĕтернĕ тата çавăнпа пĕрлех социалисăмлă халăх хуçалăхĕ туса хума кирлĕ çĕнĕ, татăклă условисене туса хунă.

Кулаксем клас пулса тăнине пĕтерес политикăна никĕслесе парса тата хресченсен талккишпех коллективизаци тăвассишĕн пынă массăлă йухăмĕн резуљтатне палăртса, Сталин йулташ 1929 çулта çапла çырнă:

„ССР Сойузĕнче капиталисăма çĕнĕрен таврса лартма ĕмĕтленекен пĕтĕм тĕнчери капиталиссен йулашки шанчăкĕ—„уйрăм харпăрлăхăн таса принципĕ" арканса тусан пулса пырать. Хресченсем, капиталисăм хăйне ваљли çĕре тислĕклемели материал вырăнне хурса шутланăскерсем, „уйрăм харпăрлăхăн" мухтанă йалавне массăлăн пăрахса, коллективисăм çулĕ çине, социалисăм çулĕ çине куçаççĕ. Капиталисăма çĕнĕрен таврса лартмали йулашки шанчăк арканать" (Сталин, Вопросы ленинизма, стр. 296).

Кулаксем клас пулса тăнине пĕтерес политикăна ПСК(б)П Тĕпкомĕн 1930 çулти йанварĕн 5-мĕшĕнче „Коллективизацин хăвăртлăхĕсем тата колхоз строитĕлствине государствă пулăшу парас майсем çинчен" йышăннă историлĕ постановленийĕнче çирĕплетсе панă. ССР Сойузĕн тĕрлĕ районĕсенче условисем тĕрлĕ пулнине, ССР Сойузĕн тĕрлĕ облăçĕсенче коллективизацине пĕр пек мар хатĕрленсе çитнине постановлени пĕтĕмпех шута илнĕ.

Коллективизаци тĕрлĕ хăвăртлăхсемпе пымала тунă. ПСК(б)П Тĕпкомĕ, коллективизаци хăвăртлăхĕсем йенчен илсе, ССР Сойузĕн облăçĕсене виçĕ группăна уйăрнă.

Пĕррремĕш группăна тĕштыр тăвакан тĕп районсене, коллективизацине ытларах хатĕрленсе çитнисене, трактăрсем ытларах, совхозсем ытларах тытса тăракансене, тырă хатĕрлевĕн иртнĕ кампанийĕсенче кулаксене хирĕç кĕрешсе ытларах опыт илнисене,—çурçĕр Кавказа (Кубаљ, Дон, Терек), Вăтам Атăла, анат Атăла кĕртнĕ. Тĕпком тĕштыр тăвакан çак районсенче коллективизаци ĕçне, тĕпрен илсен, 1931 çулти çуркунне туса çитерме хушнă.

Тĕштыр тăвакан районсен иккĕмĕш группи,—унта Украйнă, Центрти Хура тăпра облăçĕ, Çĕпĕр, Урал, Казахстан тата ытти тĕштыр тăвакан районсем кĕнĕ,—коллективизаци ĕçне, тĕпрен илсен, 1932 çулти çуркунне туса çитерме пултарнă.

Ытти облăçсем, крайсем тата республикăсем (Мускав облăçĕ, Закавказйе, Вăтам Азири республикăсем т. ыт. те) коллективизаци ĕçне пилĕкçуллăх вĕçне çитиччен, урăхла каласан, 1933 çула çитиччен тăсма пултарнă.

Коллективизаци ĕçĕн хăвăртлăхĕсем ўссе пынине пула, Тĕпком—трактăрсем, комбайнсем, трактăр çумне кăкарса ĕçлемели хатĕрсем т. ыт. те тăвакан савăтсен строитĕлствине тата ытларах васкатма кирлĕ, тесе йышăннă. Çакăнпа пĕрлех Тĕпком „колхоз йухăмĕн халђхи тапхăрĕнче лаша вăйне хаклămasăр тăрасси патне туртăннисене, лашасене салатса йарасси, сутса пĕтересси патне илсе пыракан туртăмсенĕ татăклă отпор" пама требовани лартнă.

1929—30 çулта колхозсене панă кредитсем икĕ хут (500 миллион тенкĕ таран) ўснĕ.

Колхозсене государствă шучĕпе çĕр йĕркелесе пама хушнă.

Постановленире пит те кирлĕ кăтарту панă—халђхи тапхăрта колхоз йухăмĕн тĕп форми йалхуçалăх ертелĕ пулать, тесе кăтартса панă, ертелте производствăн тĕп средствисене çеç коллективлаççĕ.

Тĕпком парти организацисене çакăн çинчен хыттăн асăрхаттарнă: „колхоз йухăмне мĕнле те пулин çўлтен „декретлени" пулмала мар, вăл колхозсем организацилес ĕçри чăн-чăн социалисăмлă ăмăрту вырăнне коллективизациле выљăс хăрушлăх туса хума пултарать", тенĕ (ВКП(б) в резолюциях, ч. II, стр. 662).

Тĕпкомăн çак постановленийĕ партин çĕнĕ политикине йалта пурнăçа кĕртес ĕçе усăмлăх кĕртнĕ.

Кулаксене пĕтермеле тата талккишпех коллективизаци тумала тунă политикăн никĕсĕ çинче колхоз йухăмĕ хăватлăн сарăлса кайнă. Хресченсем пĕтĕм йалĕпе, районĕ-районĕпе колхозсене кĕнĕ тата кулаксене çул çинчен шăла-шăла сирпĕтнĕ, кулаксен пусмăрĕнчен хăтăлса пынă.

Анчах коллективизацин пит те пысăк çитĕнĕвĕсемпе йунашарах, часах партилĕ работниксен ĕçĕнче çитменлĕхсем, партин колхоз строитĕлстви тĕлĕшĕнчи политикине пăснисем палăрма пуçланă. Коллективизацин çитĕнĕвĕсемпе ытлашши касăхса кайма йураманни çинчен Тĕпком асăрхаттарнă пулин те, парти работникĕсем нумайĕшĕ, выранти тата вăхăт условисене пăхмасăр, хресченсем колхоза кĕме мĕн таран хатĕрленсе çитнине пăхмасăр, коллективизаци ĕçне искусствĕнна васкатма тытăнна.

Колхоз строитĕлствинче харпăрхăй ирĕклĕхĕн принципне пăсни палăрнă. Чылай районсенче колхозсене харпăрхăйĕн ирĕкĕпе кĕртесси вырăнне ирĕксĕрлесе, „раскулачивани" тăвассипе, суйлав прависĕр хăварассипе тата ыттипе хăратса кĕртнĕ.

Хатĕрленў ĕçне туса пырас тата партин коллективизаци тĕлĕшĕнчи политикин никĕсĕсем çинчен чăтăмлăн ăнлантарса парас вырăнне, чылай районсенче тунă колхозсем çинчен калакан цифрăсене бўрократла, чиновникле çўлтен декретласа вĕрсе сарса йанă, коллективизаци проценчĕсене йурийех вĕрсе хăпартса пынă.

Колхоз йухăмĕн тĕп сыпăкĕ йалхуçалăх ертелĕ пулса тăрать, унта производствăн тĕп средствисене кăна пĕрлештереççĕ, тесе Тĕпком кăтартса панă пулин те, чылай вырăнсенче антрапуçланса ертелрен коммунă патне сиксе ўкнисем пулнă, пурăнмали çуртйĕрсене, таварлă мар сĕт паракан выљăхсене тата вак выљăхсене, килти кайăксене т. ыт. пĕрлештерсе пынă.

Хăшпĕр облăçсенчи йертсе пыракан работниксем, коллективизацин пирвайхи çитĕнĕвĕсемпе касăхса кайнăскерсем, коллективизаци хăвăртлăхĕсемпе срукĕсем çинчен Тĕпком тўрех кăтартса панисене пăснă. Мускав облăçĕ, вĕрсе хăпартнă цифрăсем хыççăн хăвăласа, ăна ваљли срук виçĕ çултан кайа мар (1932 çулăн вĕçĕ) пулнă пулин те, хăйĕн работникĕсене коллективизаци ĕçне 1930 çулти çуркунне туса çитересси патне çул тыттарма пуçланă. Тĕпком кăтартса панисене Закавказйере, Вăтам Азире тата ытларах чăрсăррăн пăснă пулнă.

Кулаксем тата вĕсем хыççăн çуйхăракансем, çак перегибсемпе провокацилĕ тĕллевпе усă курса, йалхуçалăх ертелĕсем вырăнне коммунăсем организацилеме, пурăнмали çурт-йĕрсене, вак выљăх-чĕрлĕхсене, килти кайăксене васкавлă пĕрлештерме сĕнсе тухса каланă. Çавăнпа пĕр вăхăтрах кулаксем, колхозра выљăха „çав-çавах туртса илеççĕ" тесе хресченсене ўкĕтлесе, колхозсене кĕриччен выљăхсене пустарассишĕн агитаци туса пынă. Клас тăшманĕсем: коллективизаци вăхăтĕнче вырăнти организацисем тунă перегибсемпе йанăшсем хресченсене тарăхтарĕç, вĕсене Совет влаçне хирĕç пăлхавсем тума çĕклĕç, тесе шаннă.

Парти организацийĕсем тунă йанăшсене пула тата клас тăшманĕн тўрремĕнех провокацилĕ ĕçĕсене пула, 1930 çулти февралĕн иккĕмĕш çурмауйăхĕнче, коллективизацин ним иккеленме çук пĕтĕмĕшле çитĕнĕвĕсем пулнă хушăрах, хăшпĕр районсенче хресченсем чылайăх кăмăлсăр пулнии хăрушă паллисем курăнна. Кулаксемпе вĕсен агĕнчĕсем хăшпĕр çĕрте хресченсене хĕтĕртсе тўррĕмĕнех Совет влаçне хирĕç выступленисем тутарма та пултарнă.

Партин Тĕп Комитечĕ, партин çулйĕрне пăснисем çинчен, коллективизаци ĕçне аркатса йарас хăрушлăха кăларса тăратаканскерсем çинчен, чылай шиклĕ хыпарсем илсен, лару-тăрăва хăвăрт йусама тытăннă, партин кадрĕсене тунă йанăшсене васкавлăн тўрлетес çул çине çавăрса тăратма пуçланă. 1930 çулти мартăн 2-мĕшĕнче Тĕпком йышăннă тăрăх Сталин йулташăн „Головокружение от успехов" йатлă статйине пичетлесе кăларнă. Коллективизацин çитĕнĕвĕсемпе касăхса кайса пысăк йанăшсем тунисене тата партин çулйĕрĕнчен чакакансене пурне те, хресченсене административлă хĕссе пырас мерăсемпе колхоз çулĕ çине куçарма хăтланакансене пурне те вăл статйăра асăрхаттарнă. Статйăра колхоза харпăрхăй ирĕкĕпе кĕмели принципа мĕн пур вăйпа палăртса панă тата коллективизацин хăвăртлăхĕсемпе меслечĕсене палăртнă чухне, ССР Сойузĕн тĕрлĕ районĕсенчи условисем тĕрлĕ пулнине шута илме кирлине кăтартса панă. Сталин йулташ çакна астутарнă: колхоз йухăмĕн тĕп сыпăкĕ йалхуçалăх ертелĕ пулса тăрать, унта производствăн тĕп средствисене çеç, пуринчен ытла тĕштырă хуçалăхĕ тăрăх, пĕрлештереççĕ, тата кил таврашĕнчи çĕрсене, пурăнмали çурт-йĕрсене, сĕт паракан выљăхсен пĕр пайне, вак выљăх-чĕрлĕхсене, килти хайăксене т. ыт. те пĕрлештермеççĕ.

Сталин йулташăн статйи питĕ те пысăк политикăлă вырăн йышăнса тăнă. Вăл статйа парти организацийĕсене хăйсен йанăшĕсене тўрлетме пулăшнă тата Совет влаçĕн тăшманĕсене, перегибсемпе усă курса хресченсене Совет влаçне хирĕç тăратма май килет тесе шанса тăнăскерсене, питĕ те вайлăн

Малали 3-мĕш страницăра

МАЛАЛИ.

çапнă. Болдшевикла парти çулйĕрĕ вырăнсенче антрапуçла тунă „сулахай" перегибсемпе нимĕнле те çыхăнса тăманнине хресченсен сарлака массисем курса ĕненнĕ. Статйа хресченсен массисем хушшине лăпкăлăх кĕртнĕ.

Перегибсемпе йăнăшсене тÿрлетес ĕçе, Сталин йултăш статйипе пуçланă ĕçе, вĕçне çитерес тесе, ПСК(б)П Тĕпкомĕ çав йăнăшсене тата тепĕр хут çапма йышăннă. 1930 çулти мартăн 15-мĕшĕнче „О борьбе с искривлениями партийной линии в колхозном движении" текен постановленине пичетлесе кăларнă.

Тунă йăнăшсене çав постановленире тĕплĕн кăтартса панă, вăл йăнăшсем партин ленинла-сталинла çулйĕрĕнчен чакнин результачĕ, партин директивĕсене тÿрремĕнех пăснин результачĕ пулнă.

„Сулахай" перегибсен практики—вăл клас тăшманне тÿрех пулăшни пулать, тесе кăтартса панă Тĕпком.

Тĕпком: „парти çулйĕрне пăсакансене хирĕç татăклă кĕрешме пĕлменнисене йе кĕрешме шутламаннисене вырăнсенчен кăларса, вĕсен вырăнне урăх çынсене лартса пыма" хушнă (ВКП(б) в резолюциях, ч. II., стр. 663).

Тĕпком хăшпĕр облаçсенчи тата крайсенчи партилĕ организацисен руководствине, политикăлă йăнăшсем тунă тата вĕсене тÿрлетме пултараймансКерсене (Мускав облаçĕ, Закавказйе), ĕçенетнĕ.

1930 çулти апрелĕн 3-мĕшĕнче Сталин йултăшăн „Ответ товарищам колхозникам" йатлă статйи пичетленсе тухнă. Вăл статйара хресченсен мăтăвĕнчи йăнăшсен тымарне тата колхоз йухăмĕнчи тĕп йăнăшсене: вăтамсем çине тĕрĕс мар пăхнине, колхозсене харпăрхăй ирĕкĕпе кĕртсе тăвассин ленинла принципне пăснине, ССР Союзĕн тĕрлĕ районĕсенче условисем тĕрлĕ пулнине шута илессин ленинла принципне пăснине, ертел урлă коммунă патне сиксе каçнине кăтартса панă.

Çак мĕнпур ĕçсене пула, партичылай районсенче вырăнти работниксем тунă перегибсене пĕтернĕ.

Партилĕ кадрсен чылай пайне, çитĕнÿсемпе каçăхса кайнăскерсене тата парти çулйĕрĕнчен пăрăнса айалала вĕçтерсе анакансене, вăхăтра тĕрĕс çул çине çавăрса тăратма Тĕп Комитетăн пит те пысăк çирĕплĕхĕ, вăл течение хирĕç кайма пĕлни кирлĕ пулнă.

Колхоз йухăмĕнчи партилĕ çулйĕре пăснисене пĕтерессине парти пурнăçа кĕртнĕ.

Çак никĕс çинче колхоз йухăмĕн çитĕнĕвĕсене çирĕплетсе хунă.

Çак никĕс çинче колхоз йухăмĕн çĕнĕ хăватлă ÿсĕмĕ валдди никĕс туса хунă.

Парти кулаксем клас пулса тăнине пĕтерес политикă çине куçиччен, капиталисла елементсене хирĕç, вĕсене пĕтерес тĕллевпе пынă пысăк наступлени пуриччен ытла, хулара, промышлĕннăçра пулса пынă. Йалхуçалăхĕ, йал, халлĕхе промышлĕннăçран, хуларан йулса пынă-ха. Çавăнпа та наступлени пĕр йенлĕ, тулли мар, пĕтĕмĕшле мар характĕрлă пулнă. Анчах халĕ, йал йулса пыни аваллăха тăрса йулма тытăнсан, хресченсем кулаксене пĕтерессишĕн кĕрешни питех те уççăн палăрсан, парти вара кулаксене пĕтерес политикă çине куçсан,—капиталисла елементсене хирĕç наступлени тăвасси пĕтĕмĕшле характĕрлă пулса кайнă, пĕр йенлĕ наступлени туни пĕтĕм фронтпа наступлени туса пырасси çине куçнă. Капиталисла елементсем çине пĕтĕмĕшле наступлени туса пырасси партин XVI сйесне пухнă вăхăт тĕлне ĕнтĕ пур йенĕпе те сарăлса пынă.

Партин XVI сйесĕ 1930 çулти ийунĕн 26-мĕшĕнче пухăннă. Сйесра ĕç тăвакан сасăпа 1.268 делегат тата канашлакан сасăпа 891 делегат пулнă, вĕсене партин 1.260.874 членĕсем тата 711.609 кандидачĕсем суйласа йанă.

Партин XVI сйесĕ парти историне „социалисăм пĕтĕм фронтпа сарлака наступлени туса пырассин, кулаксем клас пулса тăнине пĕтерессин тата талккишпех коллективизаци тăвассине пурнăçа кĕртессин сйесĕ пулса" кĕнĕ (Сталин).

Тĕпкомăн политикăлă отчотĕнче Сталин йултăш болдшевикла партин, социалисăмлă наступлени сарса йарса, мĕнле пысăк çитĕнÿсем тунине кăтартса панă.

Социалисăмлă индустриализаци тĕлĕшпе пĕтĕм халăх хуçалăхĕн мĕнпур продукцинче промышлĕннăç тÿпи йалхуçалăх тÿпинчен ытларах пуласси не пурнăçа кĕртнĕ. 1929—1930 хуçалăхлă çулта промышлĕннăç тÿпи ĕнтĕ пĕтĕм халăх хуçалăхĕн мĕнпур продукцинче 53 процентран кайа мар пулнă, йалхуçалăхĕн тÿпи—47 процента йахăн пулнă.

XV сйес тĕлне, 1926—27 çулта пĕтĕм промышлĕннăçăн мĕнпур продукцийĕ, вăрçăччен виçепе танлаштарсан, пĕтĕмпе 102,5 процента çитнĕ. XVI сйес тĕлне вара, урăхла каласан, 1929—30 çулта вăрçăччен виçепе танлаштарсан 180 процента йахăн пулнă.

Йавăр индустри,—производства средствисем туса кăларасси, машинăсем тăвасси ытларах та ытларах тĕреклеесе пынă.

„... Епĕр аграрлă çĕршывран индустрилĕ çĕршыв пулса тăрасси умĕнче тăратпăр"—тесе каланă Сталин йултăш. Вăл çамахсене пĕтĕм сйес тăвăллăн ырланă.

Анчах, промышлĕннăç аталанăвĕн пысăк хăвăртлăхĕсене,—ăнлантарса панă Сталин йултăш,—промышлĕннăç аталанăвĕн çÿллĕшĕпе пăтраштарма йурамасть. Социалисăмлă индустри халиччен курман хăвăртлăхсемпе ÿссе пынă пулин те, епĕр хамăр промышлĕннăç аталанăвĕн çÿллĕшĕпе малта пыракан капиталисла çĕршывсенчен нумай кайа йулса пынă-ха. Електрификаци ĕçĕ ССР Союзĕнче пит те пысăк çитĕнÿсем тунă пулин те, електроенерги тăвас тĕлĕшпе ĕç çавăн пек пулнă. Метал тăвас тĕлĕшпе ĕç çавăн пек пулнă. ССР Союзĕнче план тăрăх 1929—30 çулăн вĕçĕ тĕлне 5,5 миллион тонна чугун туса кăлармала пулнă, çав вăхăтрах Германире 1929 çулта 13,4 миллион тонна, Франципе 10,45 миллион тонна чугун шăратса кăларнă. Техникăпа економикă тĕлĕшĕнчен хамăр йулса пынине кĕске вăхăтрах пĕтерес тесен, пирĕн промышлĕннăç аталанăвĕн хăвăртлăхне малала вăйлатса пымала пулнă, социалисăмлă промышлĕннăç аталанăвĕн хăвăртлăхĕсене чакарма тăрăшакан оппортунистсене хирĕç чи татăклăн кĕрешсе пыни кирлĕ пулнă.

„...Пирĕн промышлĕннăç аталанăвĕн хăвăртлăхне чакарасси çинчен сÿпĕлтетекен çынсем—социалисăмăн тăшманĕсем, пирĕн клас тăшманĕсен агенчĕсем пулса тăраççĕ",—тесе кăтартса панă Сталин йултăш (Вопросы ленинизма, стр. 369).

Пĕрремĕш пилĕкçуллăхăн пĕрремĕш çулхи планне ăнăçлăн тултарнă тата ытлашшипех тултарнă хыççăн, массăсем хушшинчен „пилĕкçуллăха тăватă çулта пурнăçа кĕртмеле" тенĕ лозунг çуралса тухнă. Промышлĕннăçăн малта пыракан чылай отраçлисем (нефть, торф., пĕтĕмĕш машинсем тăвакан промышлĕннăç, йалхуçалăх машинĕсем тăвакан, електротехника промышлĕннăçĕ) плана пит те ăнăçлăн тултарса пынă, çак отраçлĕсем тăрăх пилĕкçуллăх программине 2½—3 çултах та пурнăçа кĕртме май килнĕ. Çак вăл „пилĕкçуллăха тăватă çулта" тенĕ лозунг чăннипе пурнăçа кĕме пултарнине çирĕплетсе панă тата ăна пурнăçа кĕртес пирки иккеленсе тăракан маловерсен оппортунисăмне тăрă шыв çине кăларнă.

XVI сйес Тĕпкома „социалисăмлă строительствăна малала та болдшевикла паттăр хăвăртлăхсемпе туса пыма, пилĕкçуллăха чăннипех те тăватă çулта тултармала" туйма хушнă.

Партин XVI сйесĕ тĕлне ССР Союзĕнчи йалхуçалăх аталанăвĕнче питĕ те пысăк улшăну тунă. Хресченсен сарлака массисем социалисăм йенне çавăрăннă. 1930 çулти майăн 1-мĕшĕ тĕлне тĕштыр тăвакан тĕп облаçсенче хресченсен хуçалăхĕсенчен 40—50 проценчĕ колхоза кĕнĕ (1928 çулти çуркунне 2—3 процент пулни вырăнне). Колхозсем акакан çĕр лаптăкĕ 36 миллион гектара çитнĕ.

Çапла вара, 1930 çулти йанварĕн 5-мĕшĕнче Тĕпком решенийĕнче ÿстерсе палăртса панă программăна (30 миллион гектар) ытлашшипех тултарнă. Колхоз строителствин пилĕкçуллăх программине вара икĕ çул хушшинче пĕр хут çурă ытла иртерсе тултарнă.

Колхозсен таварлă продукцийĕ виçĕ çул хушшинче 40 хут ытла ÿснĕ. 1930 çултах ĕнтĕ государствă колхозсенчен, совхозсене шутламасăр, çĕршыври тĕштырăн мĕнпур таварлă продукцийĕнчен çуррине ытла илнĕ.

Çакă вăл—йалхуçалăх кунçулне пайантан вара пĕчĕк хресченсен хуçалăхĕсем мар, колхозсемпе совхозсем палăртса парассине пĕлтернĕ.

Хресченсем колхозсене массăлăн кĕриччен совет влаçĕ, пуриччен ытла, социалисăмлă промышлĕннăç çине тайанса пынă пулсан, пайантан вара вăл çавăн пекех йалти хăвăрт ÿссе пыракан социалисăмлă сектăр çине те, колхозсемпе совхозсем çине те тайанса пыма пуçланă.

Колхозри хресченсем, партин XVI сйесĕ хăйĕн решенисенчен пĕринче кăтартса панă пек каласан, „Совет влаçĕн чăн-чăн тата çирĕп тĕрекĕ" пулса тăнă.

(ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕн малали „Чăваш Коммунĕ" хаçатăн çитес номĕрĕсенче пичетленет).

Парти пурнăçĕ

Йачĕшĕн кăна йышăннă решени

Шупашкар парторганизацинче отчотпа суйлав вăхăтĕнче коммунистсем нумай сĕнÿсем панă пулин те, ПСК(б) Парти Шупашкар хула комитечĕ чылай вăхăт хушши çав сĕнÿсем çине çавăрăнса пăхман. Йулашкинчен, октабĕрĕн 21-мĕшĕнче, пĕр труках пилĕк пуçламĕш парторганизацин отчочĕсене итлесе, çакăн пек постановлени йышăннă:

„Признать работу первичных парторганизаций реализацию предложений на отчетно-выборном собрании парторганизации не придали должного внимания этому важнейшему вопросу, поручить парторганизации принять решительные меры в деле выполнения предложений коммунистов, а инструкторам ГК ВКП(б) проверить степень выполнения этих предложений.

Обязать инструкторов горкома, культпроп тов. Игнатьева в течении 5 дней проверить все протоколы первичных парторганизаций, какие вопросы ставились перед горкомом ВКП(б), поставив на обсуждение бюро ГК и о степени их выполнении.

Тов. Романовой проследить за проведением этого мероприятия в жизнь.

Секретарь Чеб. ГК ВКП(б) Лапин".

Епĕр кунта çак постановленине вырăс чĕлхине мăкăлтаса, тĕрĕс мар, ăнланма йăвăр çырни çинчен каласа тăмăпăр, ăна вулакансем хăйсемех кураççĕ.

Кашни парторганизацин хăйĕн çитменлĕхĕсем пур. Анчах ПСК(б)П хула комитечĕ кашни парторганизаци мĕнле ĕçленине шута илмесĕр, хак памасăр, нимĕнле татăклă кăтарту тата сĕнÿ паман решени йышăннă.

Ку пуçламĕш организацисен отчочĕсене бÿрора итличчен малтан отчот тăвакан парторганизацисен ĕçĕсене вырăнсене кайса тĕплĕн тĕрĕслесе тухман. Бÿро ларăвĕнче те парторгсене нимĕнле кăтарту та паман. Пилĕк парторганизаци ĕçне итленĕ хыççăн пĕр çын та тухса каламан. Çапла вара, ПСК(б)П хула комитет бÿровĕн решенийĕ кăмăла каймала решени мар, йачĕшĕн кăна йышăннă решени пулса тăрать.

ПСК(б)П хула комитечĕ хăйĕн решенинче хула комитечĕн инструктăрĕсене пуçламĕш парторганизацисем хула комитечĕ умне лартнă ыйтусемпе сĕнÿсене пилĕк кун хушшинче тĕрĕслесе тухса бÿрона лартма хушнă. Атлашĕва йултăш, ула парторганизацинчи коммунистсен сĕнĕвĕсене пухса хула комитет çекретарне тăратнă. Игнатйĕв йултăш та спирт савăчĕ, сăран савăчĕ, стройтрест, çыхăну çурчĕ çумĕнчи организацисенчи коммунистсен сĕнĕвĕсене протоколсем тăрăх пăхса тухнă. Хула комитечĕ йышăннăранпа пилĕк кун мар, пĕр уйăх та çитнĕ ĕнтĕ. Анчах ку ыйтăва пайан кунччĕнех бÿрора сÿтсе-йавман.

Çак тĕслĕхсем ПСК(б)П хула комитечĕ пайанхи кунччĕнех ПСК(б)П Тĕпкомĕн решенине кирлĕ пек ăнланманнине кăтартса тăраççĕ.

ПСК(б)П Тĕпкомĕ йышăннă постановлени отчотпа суйлав пухăвĕсенче панă сĕнÿсене вăхăтра пурнăçлама пуçламĕш организацисене пулăшма, партилĕ-политикăлă ĕçсене вăйлатма хушать.

П. Перлов.

Лекцисем тата консулдтацисем çинчен

ПСК(б)П Обкомĕн парти вĕрентĕвĕн Тĕп çурчĕ халĕ хăйĕн пĕтĕм ĕçне парти историне вĕренекенсене пулăшас йенĕпе урăхлатса çĕнетет. ПСК(б)П Историне вĕренекенсене литературăпа, историлĕ документсемпе, консулдтацисемпе лекцисем организацилесе пулăшасси парти вĕрентĕвĕн çурчĕн тĕп задачи.

Октабĕр уйăхĕнчен пуçласа пурĕ вунă лекци иртерпĕ. Лекцисене итлеме пурĕ 900 çын ытла пынă. Халĕ ĕнтĕ парти вĕрентĕвĕн тĕп çурчĕ лекци итлеме çÿрекенсене ытларах вырнаçтарма та пултараймасть. Çак факт коммунистсемпе комсомолĕцсем тата совет интеллигенцийĕ ПСК(б)П Историне тĕплĕн вĕренме тăрăшнине уççăн кăтартса парать.

Историлĕ материалсем, цифăрсемпе фактсем парти историне вĕреннĕ чухне питех те кирлĕ. Çакна шута илсе парти вĕрентĕвĕн Тĕп çурчĕ историлĕ партилĕ тата илемлĕ литературăсен выставкине организациленĕ. ПСК(б)П Истории Кĕске курсĕн кашни сыпăкĕ тăрăх мĕнле илемлĕ литература вуламаллине кăтартса панă. III-мĕш сыпăк валдди (1904—1907 çулсем) чăваш республикинче революцилĕ йухăм мĕнле сарăлнă пулнине кăтартакан историлĕ материалсене пухса хатĕрлеççĕ.

Анчах ку ĕçсем—малтанхи пуçăмсем çеç-ха. Парти, совет, хуçалăх, профсойуз кадрĕсене болдшевисăмла вĕренсе алла илме пулăшас тĕлĕшпе тата ытларах ĕçлемеле.

Парти вĕрентĕвĕн çурчĕн районсенчи парткабинетсене куллен пулăшсе пымала. Унăн хăйĕн лекторĕсене районсене йарса пулăшмала, анчах парти вĕрентĕвĕн çурчĕ çак ĕçе йĕркелемен-ха.

Парти вĕрентĕвĕн çурчĕн библиотеки пуйан (21.000 том). Тÿрех калас пулать, парти историне вĕренекенсем çак пуйан литературăпа сахал усă кураççĕ. Парти вĕрентĕвĕн çурчĕн дирекцийĕ библиотекăпа хулари коммунистсем, комсомолĕцсем, интеллигенци куллен усă курмала тăвас тĕлĕшпе сахал ĕçлет.

ПСК(б)П Истории Кĕске курсне вĕренекенсене уйрăмăн пулăшу, консулдтаци парассине йĕркелемен. Çавăн пекех тÿлевлĕ лекцисем туса иртерессине темĕншĕн пăрахăçа кăларнă.

Вĕренÿ пахалăхĕшĕн кĕрешмеле

Пединститутри пуçламĕш комсомол организацийĕнче 670 çын. Нойабĕрĕн 16-мĕшĕнче комитет секретарĕ Комиссарĕв йултăш иртнĕ вăхăтри ĕçсем çинчен отчот туса пачĕ.

Тÿрех калас пулать, Комиссарĕв йултăш докладĕнче критикăпа самокритикă пулмарĕ, комсомол организацинчи çитменлĕхсем уççăн палăрмарĕç. Пысăк çитменлĕхсем çинчен, комитет членĕсем ĕçкĕ-çикĕ урлă çемйелесе кайни çинчен докладчик хăйса калаймарĕ.

Пухура тухса калакансем комитет начар ĕçлени çинче нумай чарăнса тăчĕç. Вăл çитменлĕхсенчен чи пысăкки политвĕренÿпе массăлă ĕçе начар организацилени пулса тăрать. Институтра 10 кружок ытла организацилесе, политвĕренĕвĕн пахалăхне пăчах манса кайнă, пропагандистсене начар хатĕрленĕ, пропсеминарсене йалăнах çеç туса иртернĕ. Çавăнпа та политкружоксене студентсем начар çÿреме пуçланă. Уйрăмăн ĕçлессине манса хăварса кружоксем çине ытларах шаннă.

Кунсăр пуçне, икĕ çул хушшинче тĕнчери лару-тăру çинчен мĕн пурĕ те икĕ доклад çеç тунă. Шефа илнĕ колхозсенче политикăлă-массăлă ĕç йапăхланса кайнă.

Комсомолĕцсем вĕренÿре малта пыраймаçн. 30 комсомолĕц начар вĕреннипе пĕр курсран тепĕр курса куçайман, хăшĕ-пĕрисем, вĕренсе тухнă чух, диплом та илеймен. Вĕренÿ пахалăхне ÿстерессине, студентсене марксисăм-ленинисăм вĕрентĕвĕпе хĕçпăшаллантарасси комсомол комитечĕн ĕçĕнче тĕп вырăн йышăнса тăман.

Комсомол хуçалăхне те йĕркелесе çитереймен. Пайан кун 130 çын учота тăман. Хăшпĕр комсомолĕцсем икĕ-виçĕ çул хушши личнăй картăчкăсăр пурăнаççĕ.

Вĕренÿ çулĕ пуçланнăранпа кăçал 6 çынна çеç комсомола илнĕ. Вăл шутра пĕр хĕрача та çук. Комсомола халĕ çеç кĕнĕ членсемпе нимĕнле ĕç те туса иртермен.

Пединститут шкулсем валдди кадрсем хатĕрлет. Ку ĕçре комсомол организацийĕ пысăк вырăн йышăнса тăмала.

Ник. Дедушкин.

Çамрăксемпе ĕçлемен

Трак районĕнче комсомолăн 67 пуçламĕш организаци отчотпа суйлав пухăвĕ пулса иртрĕ. Çак организацисенчен вунçиччĕшĕн ĕçне начар тесе хакларĕç. Мĕншĕн начар тесе хакларĕç-ха?

Акă мĕншĕн. Вăл организацисем çамрăксене коммунисла воспитани парас ĕçе пурнăçласа пыраймаçн. Сойузра тăман çамрăксем хушшинче, уйрăмăнах хĕрачасем хушшинче, политикăлă-массăлă ĕç çук. Çавăнпа та вăл организацисенче пĕр комсомолкă та çук, иртнĕ çулталлăк хушшинче пĕр çынна та комсомол ретне илмен. „Новая жизнь" колхозра 1937 çулта комитет суйланă, кăçалхи суйлав тĕлне унта 9 комсомолĕц çеç йулнă.

Йапăх ĕçленĕ пуçламĕш организацисене комсомол райкомĕ те пулăшман. Комсомол райкомĕ йĕртсе пыманнипех ĕнтĕ иртнĕ çулта суйлав иртернĕ организацисенчен тăваттăшĕнче пĕрер комсомолĕц çеç йулнă. Çапла Трак районĕнче пур колхозсенче те комсомол организацийĕ тăвассишĕн кĕрешес вырăнне, хăш-пĕр организацисем саланса пынă.

Политикăлă воспитани ĕçĕ пулман пирки „КИМ" колхозри комсомолĕцсем тĕн сĕрĕмĕнчен те тасалса çитмен.

Отчотпа суйлав пухăвĕсенче критикăпа самокритикăна аван сарса йачĕç. Комсомолĕцсем ĕçри çитменлĕхсене критиклесе, малашне мĕнле ĕçлемели çинчен паха сĕнÿсем парса хăварчĕç.

Отчотпа суйлав пухăвĕсенче комитетсен, комсоргсен ĕçне начар тесе хакланă организацисенче çитес кĕске вăхăтрах ĕçе лайăхлатса йамала. Комсомол райкомĕн пуçламĕш организацисене оперативлă йĕртсе пымала.

А. Киçелдов.

Лайăх ĕçлеççĕ

Шупашкарти „Красный мебельщик" ертел çумĕнче нумайах пулмасть виçĕ çынран комсомол организаци турĕç. Комсомолĕцсем çамрăксем хушшинче активлă ĕçлесе пыраççĕ. Халĕ комсомолĕцсен йышĕ вуннилĕк çынна çитрĕ.

Комсомолĕцсем производствăра лайăх ĕçлеççĕ. Комитет çекретарне суйланă Почичин йултăш нормăна 200—300 процент таран тултарса пырать.

И. Скворцов.

Хатĕрлев планĕсене тултарасси — республикăн чыслă ĕçĕ

ПСК(б)П Чăваш организацин облаçри XIX-мĕш конференцийĕ районсенче тата пĕтĕмĕшпе республикăра государствăна йалхуçалăх продуктисем тăратасси кайа йулни çине уйрăмăн кăтартса хăварнă хыççăн та вырăнсенче татăклă улшăну туни курăнмасть. Уйрăм райкомсемпе райĕçтăвкомсем йалхуçалăх продуктисем хатĕрлес ĕçре хатĕрлев организацисене пулăшса пырас чухне час-часах ку ĕçрен пăрăнса йулма тăрăшнă. Акă, Хĕрлĕ Чутай райĕçтăвком председателĕ пулнă Павлăв йултăш райĕçтăвком президиум ларăвĕнче—йалхуçалăх продуктисем хатĕрлесси райĕçтăвком ĕçĕ мар, ку йенĕпе ĕçлекен организацисем пур, тенĕ. Çав районри çĕрĕç пайĕн заведуйушчийĕ Михейĕв йултăш та: „Государствă умĕнчи обйазателствăсене тултариччен малтан вăрлăх фончĕсене тумала. Çавăн хыççăн çеç государствă умĕнчи обйазателствăсене тултарма тытăнмала",—тесе колхозсене кăтарту панă пулнă.

Канаш райĕçтăвком председателĕ Бугров йултăш та райĕçтăвком аппаратне хатĕрлев ĕçне тивĕçлипе хутшăнтарман. Çавна пула ĕнтĕ Канаш районĕ государствă умĕнчи пур обйазателствăсемпе те кайа йулнă. ПСК(б)П Вăрмар райкомĕн çекретарĕ Çидăрăв йултăш районри парти организацине йалхуçалăх продуктисем тăратас ĕçе мобилизацилемен. Çав вăхăтрах хатĕрлев ĕçĕпе район кайа йулса пынăшăн пĕтĕм айăпа районри хатĕрлев организацисем çине тийентерсе пынă.

Хатĕрлев ĕçĕнче партипе совет тата хатĕрлев организацисенче ĕçлекен работниксем пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса ĕçлеме пĕлменнине пула, государствă умĕнчи обйазателствăсене вăхăтра тултарма чылай чухне чăрмантарнă.

Нойабĕрĕн 20-мĕшне республикăпе аш-какай обйазателствине 85 процент çеç тултарнă. Хăйсен обйазателствисене Йелчĕкпе Патăрйел районĕсем çеç тултарнă. Обйазателствăна тултарасси патне Улатăр районĕ çывхарса çитнĕ. Аш-какай хатĕрлев обйазателствине тултарассипе уйрăмăнах Вăрмар, Куславкка, Сĕнтĕрвăрри, Канаш, Хĕрлĕ Чутай тата Çĕрпÿ районĕсем кайа йулнă.

Кăçал аш-какай обйазателствине ăнăçлăн тултарма кирлĕ условисем пулнă. Апла пулин те аш-какай хатĕрлевĕ республикăра йулса пыни вăл районри хатĕрлев уполномоченнăйĕсен аппарачĕсемпе йалсоветсем массăлă-ăнлантарулă ĕçе туса пыманнинчен килнĕ.

Государствă умĕнчи обйазателствăна тултармасăр йури туртăнса тăракан хуçалăхсем пирки районсенчи судпа следстви органĕсем вăхăтра кирлĕ мерăсем йышăнман. Акă, Вăрмар районĕнчи Кив Вăрмарпа Орнар йалсовечĕсенче йалсовет членĕсемпе колхоз правлени членĕсем октабĕрĕн 1-мĕшчен государствăна пĕр килограм та аш-какай паман пулнă. Куйпа пĕрлех Кив Вăрмар йалсоветĕнче йединоличниксенчен 64 процентне аш-какай хатĕрлевне хутшăнтарман пулнă.

Заготскот аппарачĕсенче ĕçлекен работниксем аш-какай пама пыракан ĕççыннисемпе кăмăллăн калаçмаççĕ. Аш-какай хатĕрлев ыйтăвĕпе вырăнсене тухса ĕççыннисем хушшинче массăлă-ăнлантарулă ĕçе туни пĕрре те пулман. Хăшпĕр районсенче аш-какай валдди йышăнакан вылдăхсене усрама çуртйĕрсем хатĕрлеменнипе йе апат-çимĕç çителĕклĕ таран хатĕрлеменнипе, илсе пынă вылдăхсене ним сăлтавсемсĕрех бракласа кайала тавăрса йанисем нумай пулнă. Ку тĕслĕхсем уйрăмăнах Канаш, Елĕк тата Ишлей пунктисенче ытларах пулнă. Çавăн пекех Ишлей, Трак тата Хĕрлĕ Чутай районĕсенче аш-какай паракансене вăхăтра укçа тÿлемесĕр тытса тăнă тĕслĕхсем те пулнă.

Заготскот кĕркуннехипе хĕллехи вăхăтсенче вылдăхсем йышăнма лайăх хатĕрленмен пирки, иртнĕ кĕркунне базăсемпе пунктсенче вылдăхсем массăлăн вилнĕ.

Республикăра сĕт-çу хатĕрлев обйазателствине те тултарман. Нойабĕрĕн 20-мĕшне республикă планне пурĕ те 83,9 процент çеç тултарнă. Сĕт-çу обйазателствине тултарассипе уйрăмăнах Шăхасан (62,2 проц.), Трак (70,3), Вăрмар (72,3), Шăмăршă (76,3), Çĕрпÿ (78,3), Ишлей (67,3), Патăрйел (58,2 проц.), районĕсем кайа йулнă.

Сĕт-çу обйазателствине тултарасси кайа йулни чи малтан Маслотрест (Комаров) районсенчи çу савăчĕсемпе пунктсенче ĕçлеме кадрсене лайăх суйласа лартманнинчен килнĕ.

Акă, Хĕрлĕ Чутай районĕнче сĕт-çу пухассине тĕрĕс учот туса пыманнипе государствăна панă 120 пин литр сĕте шута илмесĕр хăварнă пулнă.

Нойабĕрĕн 20-мĕшне Ишлей, Турхан тата Куславкка районĕсем государствăна çăм парса татрĕç. Хăйсен планĕсене тултарасси патне Улатăр, Тутаркас, Шăмăршă тата Шăхасан районĕсем çывхарса çитнĕ. Çав вăхăтрах, плана вăхăтра тултармасăр Вăрмар, Канаш, Пăрачкав районĕсем республикăна кайала туртса пыраççĕ. Çак районсенче ытти хатĕрлевсем те питĕ начар пыраççĕ.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Тĕпкомĕ „1938 çулта йĕтĕн тата кантăр контрактацилемели план çинчен" йышăннă постановленине колхозсем пысăк хавасланăхпа кĕтсе илчĕç. Малта пыракан колхозсем йĕтĕнпе кантăр тухăçне ÿстерессипе тата государствă умĕнчи контрактаци планне тултарассипе болдшевикла кĕрешÿн образецне кăтартрĕç. Çĕмĕрле районĕнчи „Красноармейĕц" колхоз кăçал гектартан вăтамăн 5 центнĕр йĕтĕн вăрри илсе 200 пин тенкĕ тупăш илет; Пăрачкав районĕнчи „Факел" колхоз гектартан 4 центнĕр йĕтĕн сÿсĕ туса илнĕ. Паллах, çакăн пек колхозсем государствă умĕнчи обйазателствăсене те тахçанах тултарнă. Анчах пĕтĕмĕшпе илсен, республикăра техникăлă културăсен планне тултарасси пачах çителĕксĕр пырать. Нойабĕрĕн 20-мĕшне государствăна йĕтĕн сÿсĕ парассипе плана 12,7 процент, кантăр сÿсĕпе 48,6 процент çеç тултарнă. Йĕтĕн вăрри планне 96,9 процент, кантăр вăрри планне 31,5 процент тултарнă. Техникăлă културăсен планне вăхăтра тултарассине татса паракан Улатăр, Пăрачкав тата Кувакинă районĕсем уйрăмăнах кайа йулса пыраççĕ. Çак районсем государствăна йĕтĕн сÿсĕ парас плана 10 процентран мала тултарайман-ха. Çавăнпа та ку районсенче партипе совет организацисен уйрăмăнах хытă ĕçлеме тивет.

ССРС Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Чăваш республĕкĕнчи уполномоченнăйĕн кантурĕ те облаçри XIX-мĕш конференци хыççăн хăйĕн çиçтеминчи пур ĕçсене те çĕнетсе çитереймен-ха. Çакна йалхуçалăх продуктисем хатĕрлесси республикăра кайа йулни те лайăх çирĕплетсе парать. Хатĕрлев организацисенче (заготскот, маслопром, заготзерно) сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтересси пачах çителĕксĕр пулса пырать. Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн системинче тата хатĕрлев организацисенче ĕçлекен работниксем хушшинче политикăлă-ăнлантарулă ĕçе кирлĕ вырăна лартман. Çавăн пекех государствăна йалхуçалăх продуктисем пама пыракан ĕççыннисем хушшинче те массăлă ĕçе питĕ çителĕксĕр туса пыраççĕ.

Йалхуçалăх продуктисем тăратмали обйазателствăсене çитес кĕске вăхăтрах тултарса çитерес пулать. Ку ĕçре хуçалăхлă задачăсене политикăлă ĕçсемпе таччăн çыхăнтарса ĕçлес пулать.

ССРС Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Чăваш республĕкĕнчи уполномоченнăйĕ Д. Митков.

[illegible]глири çар савăчĕсенче. ӲКЕРЧĔК ÇИНЧĔ: Англири çар савăчĕ[illegible]н пĕринче пехра-снарйадсем вырнаçтарса хураççĕ.

(Союзфото).

Сталинла Конституци кунĕ йачĕпе

Совет Союзĕнчи предприйатисем Сталинла Конституцине йышăннă-ранпа иккĕ çул тултарнине производствăра пысăк çĕнтерӳсем тунă-пе кĕтсе илеççĕ.

◆◆ Ногинскри „Электросталь" савăтра (Мускав облаçĕ) Йакăвлев йулташ смени çулталăк планне нойаберĕн 25-мĕшĕнче тултарнă. Смена коллективĕ кăçал планран ытлашши тата 1.020 тонна хурçă шăратса кăларма пулнă.

◆◆ Нойаберĕн 24-мĕшĕнче Ленинградри „изољатăрсем тăвакан „Пролетарий" савăт çулталăк планне тултарса кăçал планран ытлашши тата 3.5 мĕлйун тенкĕлĕх продукци туса кăларма пулнă.

◆◆ Нойаберĕн 25-мĕшĕнче Красноярскри карапсем тăвакан верфь та çулталăк планне тултарнă. Красноярскри депора ĕçлекенсем 40 машинис-кривоносăвĕцсем паровозсене хĕллене хатĕрлени çинчен социалисăмлă паспăрт илнĕ.

◆◆ Мускаври Сталин йачĕпе тăракан автосавăтра Демидăв маçтăран смени ĕç программине йалан 126 процент тултарса ĕçлет. Полин тата Ломакин йултăшсен бригадисем сменăра 750 шестĕрне туса кăларас вырăнне, 1.200 кăлараççĕ.

(ТАСС).

Йĕпреç районĕ финанс ĕçĕнче йулса пырат

Йĕпреç районĕ квартăларан квартăлах финанс планне тултарса пымасть пулчĕ. 1937 çулти плана республикăра чи кайа йулса пурĕ те 60.4 процент çеç тултарчĕ. 1938 çулта финанс планне тултарас ĕç татах та начар пырат. 1-мĕш квартăл планне 51,8 процент, 2-мĕш квартăл планне 56 процент, 3-мĕш квартăл планне 57,9 процент тата нойаберĕн 21-мĕшне пĕсен 4-мĕш квартăл планне 25,6 процент кăна тултарнă.

Нойабĕр уйăхĕн малтанхи вунă кунлăхĕнче ӳсĕм 5 процент, иккĕмĕш вунăкунлăхра пурĕ те 3 процент çеç пулнă. Финанс планне тултарас ĕç çакнашкал йулса пыни йăл халăх тăшманĕсем тунă сăтăрла ĕçсен йулашкийĕсене пĕтерес тĕлĕшпе районри партипе совет организацисем çителĕксĕр ĕçленине пĕлтерет.

Районра пуринчен те ытла Хуракал йалсовечĕ йулса пырат. Йалсовет нойабĕрĕн 20-мĕшне 4-мĕш квартăл финанс планне 11 процент çеç тултарнă. Йалсовет председателĕ Агаымăвпа налог агенчĕ Малышĕв йултăшсем çителĕклĕ ĕçлемеççĕ. Финанс секци членĕсене мĕнле ĕçлемелли çинчен катартусем памаççĕ. Çакăн пекех Еăпеç йалсовечĕ (председателĕ Уткин, налог агенчĕ Чернов йултăшсем) 11.8 процент, Апакасси йалсовечĕ (председателĕ Соловйов, налог агенчĕ Нарчейĕв йултăшсем) 16.1 процент, Чурачăк йалсовечĕ (председателĕ Лукойанăв, налог агенчĕ Кисељов йултăшсем) 16,5 процент, Çĕнĕ Чураш йалсовечĕ (председателĕ Пергайĕв, налог агенчĕ Платовăв йултăшсем) 24,7 процент анчах тултарнă.

Финанс планне тултарасси çакăн пек йапăх пынине пула 9 уйăх хушшинче йалсоветсен буджечĕсен планĕсем тупăш йенĕпе 69 процент, расходсем йенĕпе 58,2 процент çеç тулнă.

9 уйăх хушшинче халăха çутта кăларас ĕç вaљљи уйăрнă укçапа 53 процент, сывлăха сыхлас йенĕпе 50 процент кăна усă курнă. Çак питех те пысăк ĕçсене вăхăтра кирлĕ чухлĕ укçа памасăр тăнă.

Перекет кассипе займ уполномоченнăйĕсем те çителĕклĕ ĕçлемеççĕ. Хурамал йалсоветĕнче займ укçине 23 тенкĕ анчах пухнă. Çĕнĕ Тимĕрчейĕвски йалсоветĕнче займ укçи пухассине 12,2 процент, Чурачăк йалсоветĕнче 5.3 процент кăна тултарнă.

Укçа пухас ĕç уйрăмăнах йединоличниксем хушшинче начар пырат. Йединоличниксенчен лаша налогĕ, самообложени, йалхуçалăх налогĕ, куљтсбор тата ытти пухмалли укçа мĕлйун тенкĕ шутланат.

Çав вăхăтрах районри укçа-тенкĕ пухас ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартакан йалсоветсемпе колхозсем те пур. Акă, „Коминтерн", „Костер", „Молния", „15 лет Чувашии" тата Крупскайа, Ворошилăв, Кирăв йачĕсемпе тăракан колхозсемпе Йĕпреç посолăк совечĕ хăйсем çыраннă займ укçине тӳлесе татнă, облигацисене алла илнĕ.

Йĕпреç районĕнче финанс планне вăхăтра тултарма пур майсем те пур. Ку тĕлĕшпе районри партипе совет организацисен, финанс работникĕсен çине тăрса ĕçлени çеç кирлĕ.

Золотников.

Хасан кӳлли районĕнчи çапăçусен участникĕсем тăван йалĕсенче

ЙĔТĔРНЕ. Районри чылай колхозсене Хасан кӳлли районĕнчи çапăçусене пулнă красноармейĕцсем тăван йалĕсене таврăнчĕç.

Улăх Шăматри „Колхозник йултăшĕ" колхоза А. Йегорăв, Шăматри „Ударник" колхоза К. Çветогорăв, Мăн-Йĕкĕтри „Хĕрлĕ Октабĕр" колхоза М. Йермолайĕв, Урапакассинчи „Правда" колхоза Ксенофонтăв йултăшсем килнĕ. Вĕсене колхозниксем пысăк хаваслăхпа, йĕнĕ кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Красноармейĕцсем колхозниксене Хасан патĕнчи паттăр кĕрешӳсем çинчен каласа параççĕ.

Ник. Цветков.

КĔСКЕН

Нумай пулмасть Йӳç-Шăхаљ йалĕнче (Турхан р.) пысăк шкул çуртĕ туса пĕтерчĕç. Шкул çуртĕн тăршшĕ 42 метр, сарлакăшĕ 18 метр.

Г. Шепељов.

Авăспӳрт Кипечре (Шăхасан р.) Чулкăмакари йалпо çĕнĕ пысăк магазин çуртĕ туса лартнă. Халиччен ку йалта пĕр пĕчĕк лавка çеç пулнă.

С. Йефимăв.

„Хĕрлĕ Октабĕр" колхоз правленийĕ (Йĕтĕрне р.) чи лайăх ĕçлекен 20 колхозника сысна çурисем парса премилерĕ. Преми илнĕ колхозниксем хушшинче: В. Йефимăвă, Г. Петровă, 65 çулти Г. Дроздов, 60 çулти Ст. Охандерĕв тата ыт. те.

Нарандайкин.

Кĕçĕн Шемертеври (Йĕтĕрне р.) 7 ача амăшĕ Йекатеринă Васильĕвă кăçалхипе государствăран пурĕ 6.000 тенкĕ пулăшу илнĕ. Çак укçапа вăл ачасем валљи нумай йапаласем илсе пачĕ.

Е. Обйездчикăв.

Халăхăн куљтури ӳссе пырат

(Кĕнеке сутас ĕçре ĕçлекенĕн çырăвĕ)

Манăн Когиз-ăн Куславкка районĕнчи магазинĕн ĕçĕсем çинчен сырса пĕлтерес килет.

Халĕ социалисăмла таван çершыври пĕтĕм халăх „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне" пысăк хаваслăхпа вуласа вĕренет.

„Правда" хаçатра „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕн" сыпăкĕсене пичетлесе кăларма пуçласанах епĕр çак чапла кĕнекене сутма хатĕрлентĕмĕр. Магазина йусарăмăр. Мускавра тата ытти пысăк хуласенче çак кĕнекене сутас ĕçе мĕнле йĕркеленине сăнаса пытăмăр.

Пирĕн магазина „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕ" малтанах 260 кĕнеке, унтан 130 кĕнеке, йулашкинчен 100 кĕнеке килчĕ. Çак 390 кĕнекене епĕр питĕ йĕркелĕ сутрăмăр. Пулашки 100 кĕнекине автомашинăпа йалсем тăрах кайса сутатпăр. Мĕншĕн тесен, çак чапла кĕнекене район центарĕнче çеç мар, йалсенче те питĕ нумай ыйтаççĕ.

Манăн хамăн сырура пирĕн районри ĕççыннисем Маркс, Енгељс, Ленин, Сталин кĕнекисене йуратнине, нумай илнине палăртас килет. „ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсне" илнĕ чухне Марксăн, Енгељсăн, Ленинăн, Сталинăн уйрăм произведенисене нумай ыйтаççĕ. Вăл кĕнекесем магазина пĕрмаях килсе тăраççĕ пулин те сутанса пĕтрĕç, пачах йулмарĕç.

АРЗАМАСАВ.

Колхозниксем пуйан та куљтурлă пурăнаççĕ

1938 çулта уйăр пулчĕ пулсан та, Турхан йалсоветĕнчи (Çĕмĕрле р.) „Комбинат" колхоз агротехникă правилисене тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пынипе иртнĕ çултинчен кайа мар тупăш илчĕ. Иртнĕ çулта ĕçкунĕсем тăрăх тырă, çĕрулми т. ыт. продуктăсемсĕр пуçне 9-шар пус çеç укçа валеçнĕ пулсан, кăçал кашни ĕçкунĕ çине авансра пĕрер тенкĕ укçа тиврĕ.

Сметă тăрăх, клевĕр вăрри сутса 16 пин тенкĕ тупăш илме палăртнă пулсан, 60 пин тенкĕ тупăш илчĕç.

Çуллен пысăк тупăш илнипе колхоз пур йенчен те вăйланса пырат. Халĕ колхоз двигатĕлпе ĕçлекен арман лартрĕ. Кăçал государствăна сĕт сутса çĕнĕрен пĕр грузовик туйанчĕ. Халĕ колхозăн виçĕ автомашинă.

Колхозăн сысна тата ĕне фермисенче выљăхсен хисепĕ çуллен ӳссе пырат. Фермăсем выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес йенĕпе кăçалхи плана 100 процентчĕпех тултарчĕç.

Йал сăн-сăпачĕ тĕпренех улшăнчĕ. Йалта колхоз клубĕ, вулав çуртĕ пур. Клубра час-часах кино кăтартаççĕ, спектакљсем выљаса параççĕ. Колхозăн хăйĕн струнлă оркестр пур, унта 15 çын тăрат. Йалти кашни колхозник килне тĕрлĕрен хаçат-журналсем килеççĕ.

Пр. Федӳков.

Комсомолецсен ырă примерĕ

Йекатеринă Агафоновă Çĕмĕрле комбинатĕнче иккĕмĕш çул ĕçлет. Çак çулсем хушшинче вăл производствă программине тултарас йенĕпе кăна мар, политикăла пĕлӳве, куљтурăна хăпартас тĕлĕшпе те чылай малала кайрĕ. Халĕ вăл иртнĕ çулхипе нийепле те танлаштарма çук. Ĕç техникине пĕтĕмпех алла илнĕ. Стољарнăй цеха кĕрсен подносчикре ĕçленĕскер, паянхи кун чи ответлă, хаклă станокпа — барабанлă шлифоваљнăй станокпа ĕçлет. Станок çинче ĕçлеме кусаччен вăл кружоксенче вĕреннĕ. Малтан техминимум, унтан хыççăн государствă техекзамĕнне панă.

Анчах техекзамĕн панă хыççăн та нормăна тултараймастăмччĕ. Пĕр-икĕ уйăх хыççăн тин станока лайăх хăнăхса çитрĕм, — тет Агафоновă йулташ. Йултăшсем епĕ ĕçленине пăхаччĕç те: «Ĕçлеме пултарăн-ши, шанма çук», тетчĕç. Епĕ пăшăрханса ӳкмерĕм, тата ытларах вăйа хурса ĕçлеме пуçларăм, — саванăçлăн каласа парат вăл.

Кăçалхи çулталăк пуçламăшĕнче Агафоновă йулташ нормăна 200 процент тултарса пынă, халĕ 300 процент таран тултарат. Акă, август, çентабĕр тата октабĕр уйăхĕсен планне вăтамран шутласан 270 процент ытларах тултарнă. Пĕр брак та çук. Копейĕвă йултăшпа ăмăртса ĕçлет. Кăçхине улттăмĕш класа вĕренме çӳрет.

Григорий Тихăнăв та комбинатра иккĕмĕш çул ĕçлет. Унччен хапрăк-савăт шкулĕнче вĕреннĕ. Унăн профессийĕ — стољăр. Хăљхи вăхăтра шкафсем тунă çĕрте ĕçлесе кашни кунах нормăна 300—400 процент тултарат, уйăхне 336 тенкĕшер ĕçлесе илет. Килте йаланах тĕрлĕрен кĕнекесем вулат.

«Вертикальное сверло» станокпа ĕçлекен Нинă Буравинă, шлифоваљщицă Шура Мирошниченко йултăшсем те йаланах ĕç нормисене 180—200 процент таран тултарса пыраççĕ, çав вăхăтрах вĕсем тĕрлĕрен кружоксене вĕренме çӳресе хăйсен пĕлӳвĕсене ӳстереççĕ.

Çак йултăшсем пурте Çĕмĕрле комбинатĕнче стољарнăй цехра ĕçлекен стахановецсем. Вĕсене цехри рабочисем аван пĕлеççĕ, хисеплеççĕ. Пурте кăçал ленинла-сталинла комсомол ретне кĕнĕ.

Çакăн пек йултăшсем комбинатăн ытти цехĕсенче те сахал мар. Вĕсен йышĕ ӳссех пырат.

Хар. Лисин.

Ертел укçине çаратакансем

Кăçал, йанвар уйăхĕнче Вăрнарти инвалидсен ертелне бухгалтер тесе ĕçе пырса кĕнĕ Никишов кĕске вăхăтрах правлени председателĕпе Анисимăвпа туслашса кайса ертел ĕçне йапăхтарса йарас çул çине тăнă. Иккĕшĕ вĕсем ертеле килекен мануфактурăсене, хатĕр йапаласене хăйсем çумне чиксе пурăннă. Улталанине пĕлтерес мар тесе учот ĕçне тĕрлĕ майсемпе арпаштарнă. Çапла тунипе Анисимăв ертел укçине хăй çумне кăçал 1.700 тенкĕ, иртнĕ çулта 5.100 тенкĕ чикнĕ.

Никишов канцељарине пыракан колхозниксемпе тата ертел членĕсемпе йĕркелĕн калаçман, кăшкăрса çеç тăкнă, вĕсене улталама тăрăшнă. Кăна çак факт та аван кăтартса парат: ата-пушмак çĕлекен цех начаљникне Тихăнăв йултăша „отчот вăхăтра тăратмастăн" тесе канцељаринчен тĕксе кăларса йанă. Çитменнине тата вăл Тихăнăвăнне икĕ квитанци (220 тенкĕлĕх) вăйпах туртса илсе çухатат те çак укçана каллех Тихăнăвран илмелле тесе çырса хурат.

Самокритикăна хĕстерни, массăлă ĕçе йапăхтарса йани ертелте сарăлса пынă.

Çак „пуçлăхсен" ирсĕр ĕçĕсене халĕ тĕрĕслесе тухнă. Ертелте ĕçлекенсем государствă пурлăхне саратакансене айăплама ыйтаççĕ.

Паллах, ку ĕçшĕн Чăвашкоопинсойуз та, ревизи комиссийĕ те айăплă. Вĕсем иртнĕ çултанпах ертеле ревизи туман. Çавна пулах ĕнтĕ кăçалхи август уйăхĕнче ĕçрен кăларнă Никишов пайан кунччĕнех ертелтен уйăхне 400 тенкĕ шалу илсе тăнă.

Н. Смирнов.

Тĕрĕслӳ епĕр лайăх вĕреннине кăтартрĕ

(Красноармейĕц çырăвĕ)

Çар ĕçне тата политикăна лайăх вĕренессишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртатпăр. Иртнĕ кунсенче инспекторла тĕрĕслӳ пулса иртрĕ. Тĕрĕслӳре епĕр лайăх вĕренсе пыни курăнчĕ. Пирĕн чаçри чăваш ачисенчен пĕри те „хорошо" паллăран кайа илмерĕ.

Кусемсĕр пуçне физкуљтурă кружокĕсенче вĕренетпĕр. Çĕрпӳ районĕнчи йалсенчен килнĕ Г. Васильĕв, А. Васильĕв, Афанасьĕв йултăшсем Хĕрлĕ Çара килсен ГТО значокĕсем илчĕç. Красноармейĕц Маркелăв йулташ хăй тĕллĕн санитари инструктăрне вĕренсе тухрĕ. Вăл ПСК(б)П кандидатне кĕме хатĕрленет.

Çергейĕв (Елĕк р.), Башмаков (Тутаркас р.), Волкăв (Сĕнтĕрвăрри р.) йултăшсем татах икшер çуллăха Хĕрлĕ Çар ретне йулчĕç, Харитонăвпа Г. Васильĕв йултăшсем килес çул çар училищине кĕме хатĕрленеççĕ.

П. Йакăвлĕв.

19 концерт

Йĕтĕрнери педучилищă çумĕнчи хор, струнлă оркестр тата уйрăм исполнителсем концертсем лартма тытăнчĕç. Вĕренекенсен вечĕрĕсенче, хулари ĕççыннисем валљи, радио урлă пурĕ 19 концерт панă. Концертсен программинче — совет композитăрĕсем çырнă çĕнĕ йурăсем.

Концертсенче уйрăмăн йурлакансенчен Воронăв, Пахловă, Токсубайĕвă, Сторожовă йултăшсене палăртмала. Концерт курма пыракансем вĕсем йурланине кăмăллăн йышăнаççĕ.

Н. Ц.

Государствăн Иккĕмĕш Пилĕкçуллăх Займĕ

(Тăваттăмĕш çулхи кăларăм)

Проигрышсăр кăларăм

Выигрышсен тăххăрмĕш тиражĕн справкăлă таблици

Тираж 1938 çулхи нойаберĕн 17-мĕш тата 18-мĕш кунĕсенче Ташкент хулинче пулса иртнĕ.

Таблицăра кăтартнă номĕрлĕ серисемпе облигацисем Иккĕмĕш Пилĕкçуллăх Займăн (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) мĕн пур 200 разрйачĕсенче те выљаса илнĕ.

Облигаци хакĕ çав облигаци çине тухнă выигрышăн хисепне кĕрет.

Выигрышсене перекет кассисем „Правда", „Известия", „Труд" тата „Финансовая газета" хаçатсенче пичетленнĕ официаллă таблицăсем тăрăх, тата перекет кассисемпе государствă кредичĕн управленийĕ кăларнă официаллă таблицăсем тăрăх тӳлеççĕ.

Выигрышсем çак серисен тата облигацисен номĕрĕсем çине тухнă:

Серн №№	Облигаци №№	Выигрыш пысăккăшĕ тенкĕпе	Серн №№	Облигаци №№	Выигрыш пысăккăшĕ тенкĕпе	Серн №№	Облигаци №№	Выигрыш пысăккăшĕ тенкĕпе
00784	1—50	150	06214	1—50	150	13286	27 х)	500
00834	1—50	200	06303	36 х)	500	13545	1—50	200
00952	1—50	200	06615	18 х)	500	13572	33 х)	500
01177	15 х)	500	06673	03 х)	500	13583	50 х)	500
01763	45 х)	1000	06779	26 х)	500	13649	10 х)	1000
01852	1—50	150	06953	1—50	200	14107	1—50	150
02044	49 х)	500	07277	1—50	150	14241	1—50	150
02157	1—50	150	07633	13 х)	500	14718	1—50	150
02318	1—50	200	08148	1—50	150	14947	18 х)	500
02417	24 х)	500	08451	1—50	150	14963	1—50	200
02981	45 х)	500	08604	1—50	200	15703	21 х)	500
03083	1—50	150	08717	1—50	200	15711	1—50	150
03156	07 х)	500	08838	1—50	150	15727	1—50	150
03297	22 х)	500	09019	1—50	150	15868	1—50	150
03400	1—50	200	09106	21 х)	500	15916	39 х)	500
03525	1—50	200	09410	17 х)	500	16441	1—50	200
04091	1—50	150	09530	34 х)	500	16714	10 х)	500
04096	04 х)	500	09590	1—54	200	16717	15 х)	500
04260	25 х)	500	09616	49 х)	3000	16735	31 х)	500
04281	1—50	150	09784	1—50	150	17042	1—50	200
04387	06 х)	500	10205	41 х)	500	17357	1—50	150
04420	11 х)	500	10524	21 х)	500	17555	1—50	200
04458	39 х)	500	10602	1—50	150	17659	18 х)	500
04707	1—50	150	10645	19 х)	1000	18068	1—50	150
04817	14 х)	500	10671	36 х)	500	18258	06 х)	500
04839	1—50	150	11038	03 х)	500	18331	13 х)	500
04906	1—50	150	11380	1—50	200	18415	37 х)	500
05011	1—50	150	11578	07 х)	500	18582	21 х)	500
05172	25 х)	500	11738	1—50	150	18690	40 х)	500
05263	40 х)	500	11780	33 х)	500	18708	1—50	150
05272	1—50	200	11830	17 х)	500	18834	1—50	200
05340	1—50	150	12241	44 х)	500	18968	1—50	200
05411	1—50	150	12289	1—50	150	19044	1—50	200
05413	15 х)	1000	12578	33 х)	500	19096	28 х)	500
05416	1—50	150	12676	10 х)	1000	19330	1—50	200
05847	1—50	150	12766	1—50	150	19612	1—50	150
06204	33 х)	500	13037	1—50	150	19789	1—50	150
						19874	38 х)	500
						19955	24 х)	500

х) Çак серин ытти 49 номĕрлĕ облигацисем 150-шер тенкĕ выљаса илнĕ.

Педучилищăсенчи заочнăй çектăрсенче 755 çын вĕренет

Йалта ĕçлекен учителсенчен чылайăшĕсем заочнă вĕренеççĕ. Пирĕн Чăваш республикĕнче учителĕре ĕçлеме сахал хатĕрленнисем валљи 5 педучилищă çумĕнче заочнăй çектăрсем ĕçлеççĕ, вĕсенче пурĕ 755 çын вĕренеççĕ. Вăл шутран: Йĕтĕрнери педучилищă çумĕнчи заочнăй çектăрта 246 çын, Çĕрпӳре—251, Канашра—108, Парачкавра—90, Патăрйелĕнчи педучилищă çумĕнчи заочнăй çектăрта 60 çын вĕренеççĕ.

В. Порфирйĕв.

Ача çуратмали çурт уçнă

Шупашкар районĕн центрĕнче — Кӳкеçре нумай пулмасть ача çуратмали çурт уçнă.

Ача çуратмали çурт пысăк та çутă. Унта хĕрарăмсем валљи 15 пӳлĕм тунă. Кунтах хĕрарăмсене консуљтацисем памалли тата операцисем тумалли пӳлĕмсем пур. Районра ача çуратмали çурт уçса панăшăн хĕрарăмсем питĕ хĕпĕртеççĕ.

Е. Васильĕв.

— О —

Строителсен клубĕнче

Шупашкарти строителсен клубĕнче драмкружок кăçал «Овод», «Лекарь по неволе», «Цветы», «Огни маяка» пйесăсене пысăк маçтăрлăхпа лартса панă.

Сталинла Конституци кунĕнче лартма драмкружок «Сын» йатлă пйесă хатĕрлет.

Нумай пулмасть кунта духовой, струнлă оркестрсем тата хор кружокĕ ĕçлеме тытăнчĕç. Вĕсен составĕнче — пуринчен ытла строителствăри рабочисем.

Н. А.

— О —

Шашкă турнирĕ

Нойаберĕн 12—20-мĕш кунĕсенче „Темп" обшчĕствин членĕсемпе Стройтрестри рабочисем тата служăшчисем хушшинче шашкă турнирĕ пулса иртрĕ. Турнирта пĕтĕмпе 13 çын выљанă.

Пĕррĕмĕшпе иккĕмĕш вырăнсене Ар. Никитинпа Гер. Иванов уйăрчĕç. Вĕсем 11 çынран выљаса илчĕç. Виççĕмĕш вырăна П. Михайлăв тухрĕ. Йазыкăв, Бахарĕв, Хмељникăв рабочисем Пĕтĕм Союзри шашиссен 5-мĕш категорине илмелли нормăна выљаса илчĕç.

Иванов.

— О —

„Правда" обшчĕствин шахмăт турнирĕ

Нойаберĕн 20-мĕшĕнче Шупашкарти типографинче „Правда" спорт обшчĕствин шахмăт турнирĕ пуçланчĕ. Турнира 18 çын хутшăнчĕ. Пилĕк тур хыççăн Ижейĕвпа Трусков малта пыраççĕ. Вĕсен иккĕшĕн те 5-шер очко. И. Калистратăвпа Красновăн 4-шар очко шутланат.

О. Иванов.

Пĕтĕм тĕнчери шахмăт турнирĕ

Нойаберĕн 25-мĕшĕнче Лейденра пĕтĕм тĕнчери шахмăт турнирĕн 13-мĕш турĕ пулса иртнĕ.

Ботвинникпе Флор, Решевскипе Ейве пĕрне пĕри çĕнтереймен. Файнпа Аљохин, Капабланкăпа Керес выљаса пĕтереймен.

Выљаса пĕтереймен партисене нойаберĕн 26-мĕшĕнче выљаса пĕтереççĕ. Нойаберĕн 27-мĕшĕнче йулашки — вунтăваттăмĕш — тур пулат.

(ТАСС).

— О —

ТӲРЛЕТНИ

„Чăваш Коммунĕ" хаçатăн ĕнерхи номĕр тиражĕн пĕр пайĕнче пĕр йăнăш кайнă. 1-мĕш страницăра „Чукунçула хăвăртрах туса пĕтерессишĕн" йатлă статйара 3-мĕш абзац вĕçне çапла вуламала: „Çак сăлтавсене палăртас шутпа, нойаберĕн 24-мĕшĕнче чукунçул линийĕ çине ПСК(б)П Облаç комитечĕн çекретарĕ Волкăв йулташ пынă".

— О —

Тĕрĕсленсе килнĕ заметкăсем тăрăх

„Суту-илӳ ĕçĕнчи сăтăрла ĕçсене пĕтерессишĕн"

Çакăн пек йатлă заметкă кăçалхи октабĕрĕн 28-мĕшĕнче „Чăваш Коммунĕ" хаçатра пичетленсе тухнă. Унта: Елĕк районĕнчи Йуçкасси йалпо председателĕ Кољцов 3.442 тенкĕ, Чăваш Сурăм йалпо председателĕ Петров 3.616 тенкĕ, йалпо бухгалтĕрĕ Иванов 1.055 тенкĕ йалпо укçине салатса йанă, тесе çырнăччĕ. Кусемсĕр пуçне суту-илӳ ĕçĕнче ĕçлекен т. ыт. çынсем те йалпо укçине хăйсем çумне чикни йе салатса йани çинчен çырнă.

Ку заметкă тăрăх Чăвашсойуз представителĕ вырăна тухса тĕрĕсленĕ. Заметкăра çырнă фактсем пурте тĕрĕс. Йӳçкасси йалпо председателне Кољцова ĕçрен кăларса суда панă. Чăваш Сурăм йалпо председателне Петрова та ĕçрен кăларса суда панă. Йалпо бухгалтĕрне Иванова суд тунă.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНАВ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 639
02
Гор. Чебоксары, типография № 1 Наркомместпрома ЧАССР, заказ № [illegible] 6. 60×84 п. л.